Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 МАЙ 22 ВЫРСАРНИКУН
115 (4928) №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухать — *ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомăн хаçачĕ* — Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редактăрăн 0—67; Ред. заместителĕн 0—88; Редакци секретарĕн 4—40; Дежурнăйăн 6—23

Партин районсенчи пухăвĕсем

Çĕрпӳ, Шупашкар, Елĕк, Йишлей, Иетĕрне т. ыт. хăшпĕр парторганизацисенче отчотпа суйлав пухăвĕсем пулса иртрĕç. Халĕ пухусем Патăрйел, Тăрхан, Трак т. ыт. парторганизацисенче пыраççĕ. Пулса иртнĕ пухусен ĕçĕсем тăрăх малтанлăха хăшпĕр вывăдсем тума пулать ĕнтĕ.

Районсенчи отчотпа суйлав пухăвĕсенче ПСК(б)П райкомĕсемпе пĕрлех, ПСК(б)П Обкомĕ те хăйĕн султалăк хушшинчи ĕçĕсем çинчен отчот тăвать. Районсенчи пухусем парти Обкомĕн политикăлă сулăйĕрне тĕрĕс, унăн практикăлă ĕçĕсем çителĕклĕ пулнă тесе йышăнаççĕ. Çавăнпа пĕрлех, отчотпа суйлав пухăвĕсем пулса иртнĕ районсенче пур çĕрте те райком ĕçĕсене çителĕклĕ тесе йышăннă. Çакă вăл Чăваш парторганизаци, пĕтĕм партипе пĕрле, троцкисла-бухаринла, буржуалă-националисла бандитсемпе шпионсене, диверсантсене, сăтăрçăсене, т. ыт. мĕн пур тăшмансене çĕмĕрсе тăкас йĕнĕпе пысăк ĕçсем туса иртерни çинчен, парти организаци тăшмансемпе кĕрешсе ӳсни, хăйĕн ретĕсене нихăçанхинчен ытла тĕреклентерсе çитерни, кĕрешӳ хастарлăхне хăпартни çинчен калать. Çавăнпа пĕрлех вăл парти организацисем парти ĕçне вăйлатас, коммунисен политикăлă идейлăхне хăпартас, массă хушшинчи политикăлă ĕçе, партире тăман актив хушшинчи ĕçсене вăйлатас йĕнĕпе пысăк ĕçсем туни çинчен калать.

Районсенчи пухусем пур çĕрте те пысăк активлăхпа, критикăпа самокритикăна анлăн сарса йанă никĕс çинче иртеççĕ.

Районсенчи пухусенче, парти Обкомĕпе райком отчотĕсене сӳтсе-йавнă чухне коммунисем Чăваш парторганизаци, ПСК(б)П Тĕпкомĕ йертсе пынипе, партипе совет тата ытти организацисене тăшмансенчен тасатса вĕсен руководствине партире тăракан тата партире тăман большевиксене сĕнетес йĕнĕпе туса иртернĕ пысăк ĕçсене палăртнипе пĕрлех, ĕçри çитменлĕхсене критиклесе, вĕсене пĕтермелли майсене кăтартса параççĕ.

Пуçламăш парторганизацисен отчотпа суйлав пухăвĕсем мĕнле иртни çинчен малтанхи вывăдсем туса, епĕр тăшмансен сăтăрла ĕçĕсен йулашкисене пĕтерес ыйтăва пухусенче кирлĕ пек сивĕччĕн кăларса тăратманни çине кăтартса парăпăр. Анчах уйрăм организацисенче çакăнтан тивĕçлĕ вывăдсем тăваймаççĕ. Çак ыйту районсенчи пухусенче те, хăшпĕр çĕрте, кирлĕ пек сивĕч тăмасть. Тăшмансен сăтăрла ĕçĕсен йулашкисене кĕске вăхăтра пĕтерме кирлине пурте йышăнаççĕ. Ун çинчен пурте калаççĕ. Çав вăхăтрах ĕç çăмах калаçнипех иртет. Çавăн пек, Çĕрпӳ парторганизаци пухăвĕнче тухса калакансем тăшмансен сăтăрлă ĕçĕсен йулашкисене пĕтерме кирли çинчен пурте пекех калаçнă. Анлăх тăшмансен сăтăрла ĕçĕсен йулашкисене пĕтерес ĕç, калăпăр йалхуçалăх йĕнĕпе, мĕнле пыни çинчен, райçĕрĕç пайĕ мĕн туни çинчен, мĕн тума шутлани çинчен, пĕри те каламаççĕ. Çав вăхăтрах Çĕрпӳ районĕнчи чылай фермăсенче çаплах выльăхсем вилсе пĕтни нумай.

Рйадовой коммунисем райкомсене парти ĕçĕсене çителĕксĕр туса пыни çине кăтартса критиклеснине тĕрĕс тăваççĕ. Илепĕр Çĕрпӳ организацинех. Унта 1937 çул хушшинче партине çĕнĕрен пурĕ те 1 çын анчах илнĕ. Кăçал та кандидата 20 çын анчах илнĕ. Сочувствующисен шучĕ ӳсмест, пурĕ те 22 çын анчах. Парти организаци йалхуçалăхĕнче малта пыракансен шучĕпе те питĕ вăйсăр ӳсет. Колхозсенче пĕр пуçламăш парторганизаци те çук. Çакă вăл райком ĕçĕнче пысăк çитменлĕх пулнине кăтартать.

Парти райкомĕ партире тăман актив хушшинче ĕçлесе пыракан организацисене парти йышне те пĕрмайăх ӳстерсе пырать. Шăхасăн районĕнчи Шурнкасен 8 уйăх хушшинче кандидатсем группи кăна пулнă. Халĕ унта пуçламăш парторганизаци. Пулашки вăхăтра çĕнĕрен 2 çынна кандидата, 3 çынна сочувствующие илнĕ. Çак йулташсем хăйсен политикăлă пĕлĕвне ӳстерес, хăйсен колхозĕсенче малти выранра ка-

ларас йĕнĕпе пĕтĕм вăйа хурса ĕçлеççĕ.

Парти райкомĕсен, вĕсен инструкторĕсен партире тăман актив хушшинчи ĕçе, сочувствующисем, комсомол хушшинче ĕçлессине кĕретĕнех вăйлатмала. Вĕсен пуçламăш парторганизацисенче, пĕччен коммунисем патĕнче пумайрах пулмала.

Çавăн пекех парти вĕренĕвĕ начар тăрать. Пит те тĕрĕс калать Вахрамейĕв йулташ (Вăрнар парторганизацинчен): „Кĕркунне епĕр ĕçе вăйлăн та хĕрӳлĕн тытăнатпăр, анчах çур хĕле çитсен, ĕç нумайа пырать пулсан, çуркунне çитеспе вара вĕренес ĕç пачах сӳнсе ларать“, тесе. Халĕ чылай организацисенче парти вĕренӳвĕ çакна майлăрах тăрать. Парти Тĕпкомĕ парти вĕренĕвĕнче сезонлăх пулмала мар тенине хăшпĕр организацисенче манма пуçланă. Çак çитменлĕхе халех пĕтермеле.

Районри пухусем умне пĕтĕм пысăклăхĕпе политикăлă ĕçе хуçалăх ĕçĕсемпе сыхăнтарса пырас ыйту тухса тăрать. Политикăлă ĕç хуçалăх ĕçĕнчен, хуçалăх ĕçĕ политикăлă ĕçрен уйăрăлма пултараймасть. Анчах çак чăнлăха чылай çĕрте манаççĕ.

Хăшпĕр организацисенче, сăмахран Вăрнар, Шупашкар, т. ыт. организацисенче хăй вăхăтĕнче çак ыйтăва тĕрĕс мар ăнланни пулнă. Парти Тĕпкомĕн 1937 çулти февраль-мартри Пленумĕ парти организацисем хуçалăх ĕçĕнчи ăнăçусем хыççăн кайса парти ĕçĕсене пăрахса хăварни çинчен кăтартса панипе малашне ĕнтĕ текех хуçалăх ĕçĕсене йертсе пымала мар тесе ăнланнă. Çавăн пек ăнланнă та, хуçалăх ĕçне те аларан вĕçертсе йанă, парти ĕçĕ патне те тăччăн пырса тăрайман. Çакăн пек тĕрĕс мар ăнланни результачĕ чăвах хăй çинчен систерчĕ: парти ĕçĕ те малала каймасть, хуçалăх ĕçĕнче те чылай çĕрте (тырпул, ашкăкай, сĕт çу, вăрман хатĕрлевĕсем, укçа тĕрке пухас ĕç, строительства т. ыт.) прорывсем пулма пуçларĕç. Çак йăнăша парти организацисен хăвартран тӳрлетмелĕ, хуçалăх ĕçĕнче кайа йулса пынине пĕтермеле.

Партин пĕтĕм организацисем умĕнне вирлĕн тăракан задач вăл — РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлавне лайăхрах, организацилĕрех иртерсе тăвасси. Калас пулать, çак ыйтăва хăшпĕр çĕрте кирлĕ пек сивĕччĕн лартмаççĕ, ун патĕнчен пăрăнса иртме пăхаççĕ. Çавăн пек, Шупашкар райĕçтăвком председателĕ Хабарăв йулташ районри парторганизаци пухăвĕнче çур сехет хушши калаçнă, анчах, çав вăхăтрах, суйлава хатĕрленесси çинчен пĕр сăмах та каламан. Хабарăв йулташран коммунисем суйлав камнани мĕнле пыни çинчен каласа пама ыйтсан, вăл: ун çинчен кайран калатăп тенĕ, анчах кайран та каламан.

Çакăн пек ответлă ыйту патĕнчен нимкам та, ниепле те айаккинчен иртсе кайма пултараймасть.

Халĕ пĕтĕм çĕршыв союзлă республикăсемпе автономлă республикăсен Верховнăй Совечĕсене депутат суйлама кандидатсем тăратать. Пур çĕрте те кандидатсем çинчен сӳтсе-йавма суйлав умĕнхи округ канашлăвĕсем пыраççĕ. Хапрăк-савăтсенчен, колхозсемпе совхозсенчен суйласа йанă представителсем коммунисла организаци, профсойуз, комсомол тата партилĕ мар организацисен представителĕсемпе пĕрле округ тăрăх тăратнă кандидатсене пирки канашласа татăлассĕ. Çак кандидатсене коммунисемпе партире тăман, ĕçре тĕрĕсленнĕ йулташсенчен доверенныйсем уйăрассĕ. Парти организацисен çак доверенныйсене пулăшма активран çынсем уйăрса памала. Парти организацисен çакна манмала мар: суйлава анăслă иртересси вĕсем ответлă. Доверенныйсемпе, вĕсене пулăшма уйăрнă активпа ĕçлесси, вĕсемпе канашлусем иртересси — çаксем пурте вĕсем парторганизацисен умне пысăк задачăсем. Çавăнпа та парти пухăвĕсенче суйлав кампанийĕ ыйтăвĕ тĕп выранта тăмала. Пирĕн парти организацисен суйлава тивĕçлĕн йертсе пыма пултарнине тепĕр хут кăтартмала.

Патăрйел тата Аслă Арапуç суйлав округĕсенче

Турхан районĕнчи В. М. Молăтăв йачĕпе тăракан колхоз членĕсен суйлав умĕнхи пухăвĕ РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама

Вйачеслав Михайлăвич Молăтăв

тата ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама

Димитрий Андрейĕвич Андрейĕв

йулташсен кандидатурисене тăратнă

Пухура 95 колхозник пулнă

Майăн 18-мĕшĕнче Турхан районĕнчи Молăтăв йачĕпе тăракан колхоз членĕсен РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене депутата суйлама кандидатсем тăратас тĕлĕшпе пухăнна суйлав умĕнхи пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура малтан колхозник Борисăв Леонтий Çергейĕвич тухса каларĕ.

„Епĕ,—тет вăл—РСФСР Верховнăй Советне Патăрйел суйлав округĕ тăрăх хамăр колхоз пухăвĕ йачĕпе депутата суйлама кандидата Сталин йулташăн чи лайăх соратникне, ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателне Вйачеслав Михайлăвич Молăтăв йулташа палăртма сĕнетĕп“.

Кун хыççăн тухса каланă йулташсем Борисăв йулташ сĕнӳне пурте пĕр кăмăллăн йышăнчĕç.

Çак пухурах колхозник Коновалăв Иван Иванăвич Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата парти райкомĕн çекретарне Димитрий Андрейĕвич Андрейĕв йулташа тăратма сĕнчĕ.

Турхан районĕнчи В. М. Молăтăв йачĕпе тăракан колхоз членĕсен суйлав умĕнхи пухăвĕ йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИ

Шурут йалсоветĕнчи В. М. Молăтăв йачĕпе тăракан колхозниксемпе колхозницăсен пухăвĕ Росçийă Социалисăмлă Федеративлă Советлă Республикăн Верховнăй Советне депутата суйлама кандидат тăратасси çинчен сӳтсе-йавнă май, çапла йышанать:

1. Патăрйел суйлав округĕ тăрăх РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата Сталин йулташăн чи лайăх соратникне, чи лайăх йулташне, Совет правительствин пуçлăхне, коммунисăмăмшăн ыванми канми кĕрешекене, пирĕн чунтан йуратнă Вйачеслав Михайлăвич Молăтăв йулташа палăртас. Вăл ПСК(б)П членĕ, Мускав хулинче, Кремĕлре пурăнать.

Вйачеслав Михайлăвич Молăтăв йулташран РСФСР Верховнăх Советне депутата суйланма Патăрйел округĕнче баллотировкăна тăма килĕшӳ пама ыйтас.

2. Аслă Арапуç суйлав округĕ тăрăх Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата ПСК(б)П Турхан райкомĕн çекретарне Димитрий Андрейĕвич Андрейĕв йулташа тăратас. Вăл 1905 çулта çуралнă, 1925 çултанпа ПСК(б)П ретĕнче тăрать, Чăваш республикĕнчи Турхан йалĕнче пурăнать.

В. М. Молăтăв йачĕпе тăракан колхоз членĕсен пухăвĕ Д. А. Андрейĕв йулташран Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйланма Аслă Арапуç суйлав округĕнчен баллотировкăна тăма килĕшӳ пама ыйтать.

В. М. Молăтăв йулташ Армйан СС Республикĕн Верховнăй Совет депутатне суйланма баллотировкăна тăма килĕшӳ панă

Майăн 17-мĕшĕнче Арменири ĕççынисем савăнăçлă хыпар илнĕ — совет Правительствин пуçлăхĕ Вйачеслав Михайлăвич Молăтăв, Йереван хулинчи 33-мĕш номĕрлĕ Гедарчайски суйлав округĕ тăрăх Армйан СС Республикĕн Верховнăй Совет депутатне суйланма баллотировкăна тăма килĕшӳ панă.

Çав кунах хулари стадионра суйлавçăсен 20 пин çынлă митингĕ пулса иртнĕ. Митингра тухса каланă стахановецсем, пограничниксем, студентсем, совет интеллигенцин представителĕсем коммунисемпе партире тăманнисен сталинла блокĕн никам çĕмĕрейми вăйĕ çинчен, Армйан халăхĕ унăн чи лайăх представителĕсемшĕн пĕр шухăшлă пулса сасă парасси çинчен каланă.

Армйан СС Республикĕн Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен 33-мĕш номĕрлĕ Гедарчайски суйлав округĕнчи суйлав комиççи В. М Молăтăв кандидатурине регистрациленĕ.

(ТАСС).

ССР Сойузĕнчи аслă шкул работникĕсен Пĕтĕм Сойузри Пĕрремĕш канашлăвĕ — Сталин йулташа

Хаклă çулпуç тата учитĕл, йуратнă Сталин йулташ!

Аслă шкул работникĕсен Пĕтĕм Сойузри пĕрремĕш канашлăвĕ сирĕн пата çыру йарса, хăй пирĕн Аслă Тăван çĕршыва, Совет правительствине, Пĕтĕм Сойузри большевиксен Коммунисла Партине вĕçĕмсĕр йуратса тăнине кăтартса парать.

Фашисла çĕршывсен правительствисем хăйсен пĕтĕм вăйĕсене империалисла вăрçă хатĕрлес çĕре, хуласене, хĕрарăмсемпе ачасене варварла пĕтерсе тăкас çĕре, культурăпа цивилизацин мĕн пур элеменчĕсене пĕтерсе хурас çĕре йараççĕ. Капиталисăмлă çĕршывсенче, кризиса пула тата ĕççыннисене хытăн эксплоатациленине пула, культура, аслăлăх тата сутта кăларас ĕç кайала чакса пырать.

Пирĕн патра кăна, пирĕн çĕршывра кăна, капиталисăм пусмăрĕнчен ирĕке тухнă çĕршывра кăна промышленнăç, йалхуçалăхĕ чечекленсе ӳссе пырать, чăн-чăн культура, аслăлăх тата сутта кăларас ĕç чечекленсе ӳссе пырать.

Вĕренӳ прави — вăл ССР Сойузĕнчи ĕççыннисем кĕрешсе илнĕ тата Сталинла аслă Конституци çине çырса хунă сирĕп прав пулса тăрать. Пирĕн аслă шкулсем, вĕсенче 550 пин студент вĕренет, 1938 çулта аслăлăхпа техникăн пур отраслисем тăрăх та 100 пин çамрăк специалиссем вĕрентсе кăлараççĕ.

Кăçалхи çул Правительства аслă шкулсене 166 пин çын илмеле тунă — çакăн пек ӳсĕм тĕнчери нихăш капиталисăмлă çĕршывра та халиччен пулман. Аслă шкулсем вĕренсе пĕтернисем вуншар пин çын хальхи вăхăтра пирĕн аслă çĕршывра социалисăм строительствин пур участкисенче те ответлă, йертсе пыракан ĕçсенче ĕçлеççĕ.

Фашиссене тăра кĕрешнĕ пӳтсĕрсен банди — ылханлă троцкисла-бухаринла тата буржуалă-националисла шпионсем тата провокатăрсем аслă шкула сахал мар сăтăр турĕç, анчах та пирĕн халăх малала, телейлĕ, хавăслă, культуралă пурнăç патне кайнине тытса чараймарĕç тата нихăçан та никам та тытса чарайас çук.

Хамăрăн революцилĕ сыхлăха ӳстерсе, епĕр пирĕн мухтавлă разведкăна, шанчăклă ленинĕц — Сталинла Нарком Николай Иванăвич Йежов пуçпулса йертсе пыракан разведкăна, пирĕн аслă шкулсене, пирĕн пĕтĕм çĕршыва пекех, троцкисла-бухаринла тата ытти контрреволюцилĕ мĕн пур тасамарлăхсен йулашкийĕсенчен вĕçне çитиех тасатма пулăшăпăр.

Сойузлă тата автономлă республикăсен Верховнăй Совечĕсен çитес суйлавĕсенче епĕр, аслă шкул работникĕсем сойузлă тата автономлă республикăсен Верховнăй Совечĕсене тăван çĕршывшăн хăйĕн мĕн пур вăйне парса ĕçлекенсене, ĕçре тĕрĕсленнĕ çынсене суйлăпăр, коммунисемпе партире тăманнисен блокĕн çĕнтерĕвĕ пĕтĕм совет халăхĕн моральлĕ-политикăлă пĕрлĕхĕ никам çĕмĕрейми пулса тăнине пĕтĕм тĕнче умĕнче çĕнĕрен вăйлăн кăтартса памала тума мĕн пур вăйа хурăпăр.

Епĕр аслă шкулта пысăк çитменлĕхсем пуррине йăлтах пĕлсе тăратпăр. Анчах пирĕн ĕçлесе пыма лайăх программă пур, аслă шкулти ĕçе лайăхлатасси çинчен, пысăк квалификацилĕ, Ленин—Сталин ĕçне вĕçĕмсĕр йуратса туса пыракан çамрăк специалиссем хатĕрлесси çинчен пирĕн парти тата Совет Правительстви панă сирĕп кăтартусем пур.

Сире, хаклă Сталин йулташ, епĕр çапла шантаратпăр: çав директивăсене епĕр пурнăçа кĕртетпĕр, тăшмансен сăтăрла ĕçĕсен йулашкийĕсене йăлтах пĕтеретпĕр, вĕренӳ ĕçĕнче кăтартулă йĕрке тăватпăр, пирĕн çамрăксен идейлă-политикăлă тата техникăлă хатĕрленĕвне татах та çӳлĕ выранна лартассишĕн ывăнма-канми ĕçлесе пыма пулатпăр.

Епĕр, Сталин йулташ, партипе правительства тата Ĕçĕр хăвăр, — пирĕншĕн тăван çын, аслă учитĕл, — пирĕншĕн куллен-кун тăрăшнине пысăка хурса хаклатпăр. Ĕçĕр çапла тăрăшса ĕçленипе пирĕн аслă шкулсене хăватлăн ӳссе, вăйланса пыма, вĕсенче аслăлăхпа тĕнчев ĕçне анлăн туса пыма тата профессăрсемпе преподавателсен квалификацине ӳстерсе пыма тата вĕсен материаллă пурнăçне пĕр майах лайăхлатса пыма пур условисене те туса панă.

Пирĕн тăшмансем пурте пĕлсе тăччăр: совет аслă шкулĕсем вĕсем — пирĕн кадрсене туса кăларакан, лăпкă пурнăçăн творчествăлă ĕçĕ вальли тата строительства вальли кадрсем туса кăларакан вучахсем пулса тăраççĕ, çав кадрсем пирĕн никам тĕкĕнме пултарайман тăван çĕршыва сыхлама тата тăшмана унăн хăйĕн территорийĕ çинчех пĕр чарăнмасăр пĕтерсе тăкма кирек хăш вăхăтра та, пĕр çын пек пулса, хатĕр тăраççĕ.

Сывă пултăр Марксăн—Енгельсăн—Ленинăн никам çĕнтерейми йалавĕ!

Сывă пултăр пирĕн çулпуç, тус тата учитĕл тăван Сталин йулташ!

ССР Сойузĕнчи аслă шкул работникĕсен Пĕтĕм Сойузри Пĕрремĕш канашлăвĕ — Молăтăв йулташа

Хаклă Вйачеслав Михайлăвич!

Аслă шкул работникĕсем — директăрсем, профессăрсем, доцентсем, аспирантсем тата студентсем, аслă шкул ĕçĕ йĕнĕпе ĕçлекен Пĕтĕм Сойузри 1-мĕш канашлăва пухăннăскерсем, Сире, шанчăклă большевика, ленинĕца, халăхсен Аслă çулпуçĕн Сталин йулташăн çывăх соратникне саламлаççĕ.

Совет аслă шкулĕ йулашки çулсенче пысăк çитĕнӳсем турĕ. Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе пирĕн партин Тĕпкомĕ аслă шкул çинчен йышăннă историлĕ постановленисем партипе правительства тата Сталин йулташ пирĕн çĕршывра аслă вĕренӳ парассишĕн тăрăшнине ӳççăн кăтартса паракансем пулса тăраççĕ.

Партипе правительства аслă шкула, социалисăмлă культурăн тĕп никĕсĕнчен пĕри пулса тăраканнине, пур йенчен те аталантарса тата çирĕплетсе пыма кирли çинчен кăтартса каланисем пирĕншĕн пуриншĕн те, аслă шкул работникĕсемшĕн пуриншĕн те ĕç программи пулса тăраççĕ.

Епĕр хаклă Вйачеслав Михайлăвич, çав калама çук пысăк задачăна татса парассине пирĕн Сталинла самана ыйтнисен çӳлĕшĕнче тăрассишĕн мĕн тумалисене пурне те тăватпăр.

Пирĕн çине Сталинла тăрăшса пăхаççĕ, епĕр хамăрăн пĕтĕм вăйсене кадрсем хатĕрлес ĕçе, хăйсен тăван çĕршывĕшĕн пĕтĕм вăйĕсене парса ĕçлекен, аслăлăхла тата техникăлă пĕлӳпе тарăннăн хĕçпăшалланнă кадрсем хатĕрлес ĕçе паратпăр.

Епĕр революцилĕ сыхăлăха татах та çӳлĕ пусăма лартма пулатпăр, аслă шкулсенчен фашисăмăн троцкисла-бухаринла тата буржуалă-националисла агенчĕсене тымарĕпех кăкласа тăкма тата тăшмансен сăтăрла ĕçĕсен йулашкийĕсене кĕске срукрах пĕтерме пулатпăр.

Сире, Вйачеслав Михайлăвич епĕр пирĕн çĕршыв оборонине çирĕплетессишĕн ыванми-канми ĕçлеме пулни çинчен шантаратпăр.

Пирĕнтен кашнийех пĕтĕм вăйа, пĕтĕм пултарулăха тата пĕлĕве, кирлĕ пулсан пурнăçа та, малашне те пирĕн тăван çĕршыв ӳссе пырассишĕн, унăн оборонине çирĕплĕтессишĕн тата унăн таса чиккисене никам пырса тĕкĕнейми тăвассишăн пама хатĕр.

Сывă пултăр пирĕн Совет правительстви тата унăн пуçлăхĕ Молăтăв йулташ!

Сывă пултăр ПСК(б) Партин Сталинла Тĕп Комитечĕ!

Сывă пултăр ССР Сойузĕнчи халăхсен çулпуçĕ, пирĕн тус тата учитĕл—Аслă Сталин!

Пĕтĕм тĕнчери пианиссен конкурсĕнче

Брюççĕльрен (Бельги) пĕлтернĕ тăрăх, майăн 19-мĕшĕнче Ежен Изаи йачĕпе иртекен пĕтĕм тĕнчери пианиссен конкурсĕнче пулнă пианиссем малтан тухса выльани пĕтнĕ.

Кăçхине халăхпа лăк тулли тулнă илемлĕ искусствăсен двореçĕн залĕнче пĕрремĕш тур результачĕсене пĕлтернĕ. 87 пианисран иккĕмĕш турта тухса выльама 19 çынна çеç ирĕк панă.

Чи нумай вырăн (пилĕк) французсем илнĕ. Германи пианисĕсене иккĕмĕш турта тухса выльама пĕрине те ирĕк паман.

Совет сойузĕнчен иккĕмĕш турта тухса выльама Емиль Гилельс тата Йакăв Флиййĕра ирĕк панă. Вĕсем иккĕшĕ те майăн 21-мĕшĕнче тухса выльаççĕ.

(ТАСС).

Папанинĕцсем — Çурçĕр тинĕс çулĕн тĕп тытăмĕн йертсе пыракан ĕçĕсенче

Çурçĕр тинĕс çулĕн тĕп тытăмĕн приказĕпе, Совет Сойуз Геройне Е. Т. Кренкел йулташа Çурçĕр тинĕс çулĕн Тĕп тытăмĕн полярлă станцисен тытăмĕн начальникне лартнă. Совет Сойуз Геройне П. П. Ширшов йулташа пĕтĕм сойузри арктика институчĕн (Ленинградра) директорне лартнă.

(ТАСС).

Хебейре 300 пин партизан

Хебей провинцинче (Çурçĕр Китай) 300 пин партизанран кайа мар çапăçаççĕ. Вĕсем 200 ытла отрядра пĕрлешнĕ. Партизансем Бейпин—Ханькоу чукунçулĕ тăрăх çӳрессине чарса лартнă. Йулашки ерне хушшинче партизансем пысăк хуласем—Динчжоу тата Баодин çине тапăннă. Китай халăхĕ партизансене пулăшать тата партизан отрйачĕсене массăлла кĕрет. Нумай районсенче партизан отрйачĕсене 8-мĕш революцилĕ халăхăн çарĕн командованийĕ йертсе пырать.

(ТАСС).

ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама Чăваш халăхĕ палăртнă кандидатсем

Уйкас суйлав округĕ

Çĕрпÿ районĕнчи „Богатырь" колхоз членĕсен суйлав умĕнхи пухăвĕ Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама

Иван Йевдокимăвич Йевдокимăв

йулташ кандидатурине палăртнă

ÇĔРПŸ. Майăн 18-мĕшĕнче Патăрйелĕнчи „Богатырь" колхоз членĕсен суйлав умĕнхи пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура колхозник Çергей Павлăвич Павлăв йулташ Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата „Богатырь" колхозри сысна фермин пуçлăхне Иван Йевдокимăвич Йевдокимăв йулташа палăртма сĕнÿ пачĕ. Колхозниксем пĕрин хыççăн тепри тухса каласа, Павлăв йулташ сĕнĕвне хута кĕчĕç, Иван Йевдокимăвич йулташа ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата тăратма сĕнчĕç.

„Çĕрпÿ районĕнчи „Богатырь" колхоз членĕсен суйлав умĕнхи пухăвĕ йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИРЕН

Пухура 151 çын пулнă

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидатсем тăратасси çинчен сÿтсе-йавнă май, „Богатырь" колхоз колхозникĕсен пухăвĕ çапла йышăнат:

1. Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата Çĕрпÿ районĕнчи „Богатырь" колхозри сысна фермин пуçлăхне, партире мар бољшевика Иван Йевдокимăвич Йевдокимăв йулташа палăртас.

2. Иван Йевдокимăвич Йевдокимăв йулташран Уйкас суйлав округĕ тăрăх Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйланма баллотировкăна тăма хăйĕн килĕшÿне пама ыйтас.

Исакăвă суйлав округĕ

Крахмал савăтĕнчи рабочисемпе служăшчисен, „Новый мир" колхоз колхозникĕсен суйлав умĕнхи пухăвĕсем Чăваш Верховнăй Советне депутата суйлама

Никонор Миронăвич Çеменăв

йулташ кандидатурине тăратнă

ТРАК. (Хамăр корр.). Майăн 19 мĕшĕнче Крахмалтрестăн „Бољшевик" савăтĕнчи рабочисемпе служăшчисен пухăвĕ РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене депутата суйлама кандидатсем тăратас ыйтăва сÿтсе-йавре. Пухура чи малтан Табаков йулташ сăмах тухса каларĕ. Вăл „Чăваш Коммунĕ" хаçат редакторне Никонор Миронăвич Çеменăв йулташа ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата палăртма сĕнÿ парат. Пуху Табаков йулташ сĕнÿне хапăл туса йышăнат.

„Бољшевик" савăтри рабочисемпе служăшчисен пухăвĕ йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИ

Епĕр, Крахмалтрестăн „Бољшевик" савăтĕнчи рабочисемпе служăшчисем, ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидат тăратасси çинчен сÿтсе-йавса, пурте пĕр шухăшлă пулса çапла йышăнатпăр:

1. Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама партин Трак райкомĕн секретарĕ пулнă, халĕ „Чăваш Коммунĕ" хаçат редакторне, ПСК(б)П члене, Шупашкар хулине пурăнат,—Никонор Миронăвич Çеменăв йулташ кандидатурине тăрататпăр.

2. Епĕр, пухăва пухăнна рабочисемпе служăшчисем, Н. М. Çеменăв йулташран ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйланма Исакăвă округĕнче баллотировкăна тăма килĕшÿ пама ыйтатпăр.

* * *

Çакăн пекех, Çавал çырма йалсоветĕнчи „Новый мир" колхоз членĕсем те хăйсен пухăвĕнче Н. М. Çеменăв йулташа ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата палăртса постановлени йышăннă.

Пантăк суйлав округĕ

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи „Хĕрлĕ çалтăр" колхоз колхозникĕсемпе колхозницисен пухăвĕ ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама

Алексей Михайлăвич Розанăв

йулташ кандидатурине палăртнă

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Мижеркассинчи „Хĕрлĕ çалтăр" колхоз членĕсен пухăвĕнче йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИ

Пухура 126 çын пулнă

ЧАССР Верховнăй Советне Пантăк суйлав округĕ тăрăх депутата суйлама кандидата хамăрăн социализмла çĕршывăн шанчăклă ывăлне, Ленин—Сталин ĕçне черерен парнаса ĕçлекене, троцкистсемпе бухаринĕçсене тата буржуаклă-националисене хирĕç вăйлăн кĕрешсе пыракана, ЧАССР Шалти ĕçсен Халăх Комиссарне,—1900 çулта çуралнă, ПСК(б)П члене, Шупашкар хулине пурăнат,—А. М. Розанăв йулташа палăртатпăр.

Пуху А. М. Розанăв йулташран ЧАССР Верховнăй Советне депутата Пантăк суйлав округĕ тăрăх суйланма баллотировкăна тăма килĕшÿ пама ыйтат.

Шуркасси суйлав округĕ

Шăхасанта кĕçĕн тата вăтам шкулсенче ĕçлекенсен профессиле союз членĕсен пĕрлешÿлĕ пухăвĕ Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама

Прасковйа Александрăвнă Григорйĕвă

йулташ кандидатурине палăртнă

Шăхасанти кĕçĕн тата вăтам шкулсенче ĕçлекен профсойуз членĕсен пухăвĕ йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИ

Матăшу йалĕнчи пуçламăш шкул заведующине,—1878 çулта çуралнă, партире тăмаст, халăха çутта кăларас ĕçре 31 çул ĕçлекен Прасковйа Александрăвнă Григорйевă йулташа ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата таратас.

Григорйевă йулташран ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйланма Шуркасси суйлав округĕнче баллотировкăна тăма килĕшÿ пама ыйтас.

Хирти Сĕнтĕр суйлав округĕ

„Трактăр", „Комбайн" колхоз колхозникĕсен пухăвĕсем ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама

Вадим Петрович Чернов

йулташ кандидатурине тăратнă

Тивĕшри „Комбайн", Кипеçри „Трактăр" колхоз колхозникĕсен тата йединоличниксен пухăвĕнче йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИ

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата Хирти Сĕнтĕр суйлав округĕ тăрăх суйлама ПСК(б)П Патăрйел райком секретарне Вадим Петрович Чернов йулташа, 1906 çулта çуралнă, парти членне, кандидата таратас.

Пуху Б. П. Чернов йулташран ЧАССР Верховнăй Советне Хирти Сĕнтĕр суйлав округĕ тăрăх суйланма баллотировкăна тăма килĕшÿ пама ыйтат.

Çĕрпÿ суйлав округĕ

Çĕрпÿ районĕнчи „1905-мĕш çул" колхоз колхозникĕсен суйлав умĕнхи пухăвĕ ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама

Михаил Федăрăвич Терентйĕв

кандидатурине тăратнă

Çĕрпÿ районĕнчи Ивански салинчи „1905-мĕш çул" колхоз колхозникĕсен пухăвĕ йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИ

ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидатсем тăратасси çинчен сÿтсе-йавнă хыççăн, Ивански салинчи „1905-мĕш çул" колхоз колхозникĕсен пухăвĕ çапла йышăнат:

1. ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата ПСК(б)П Чăваш Обкомĕн сутуилу пайĕн пуçлăхне, —1905-мĕш çулта çуралнă, Шупашкарта пурăнат,—Михаил Федăрăвич Терентйĕв йулташа тăратас.

2. М. Ф. Терентйĕв йулташран Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйланма Çĕрпÿ суйлав округĕ тăрăх баллотировкăна тăма килĕшÿ пама ыйтас.

Албахтинă суйлав округĕ

Йанкасри „Атăл" колхоз членĕсен пухăвĕ ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама

Йевдокийă Дмитрийĕвнă Дмитрийĕвă

йулташ кандидатурине тăрантнă

Пухура 90 çын пулнă

ТРАК, (Хамăр корр.) Йанкасри „Атăл" колхоз членĕсен суйлав умĕнхи пухăвĕ питĕ пысăк хавасланса иртрĕ. 58 çулхи колхозник Лапшин йулташ ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама ПСК(б) Партин Трак райкомĕн инструкторĕн Йевдокийă Дмитрийевнă Дмитрийевă йулташ кандидатурине палăртма сĕнет. Унăн хыççăн 5 çын тухса сăмах каларĕç. Вĕсем пурте Лапшин йулташ сĕнĕвĕпе килĕшеççĕ.

Йанкасри „Атăл" колхоз членĕсен пухăвĕ йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИРЕН

1. ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама Албахтинă суйлав округĕ тăрăх ПСК(б)П Трак райкомĕн инструкторне,—1908 çулта çуралнă, Малти Трак йалĕнче пурăнат,—Йевдокийă Дмитрийĕвна Дмитрийĕвă йулташа кандидата таратас.

2. Дмитрийĕвă йулташран ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйланма Албахтинă суйлав округĕнче баллотировкăна тăма килĕшÿ пама ыйтас.

Карай суйлав округĕ

„Йанмурзино" колхоз членĕсен суйлав умĕнхи пухăвĕ ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама хăйсен колхозĕн председательне

Йефремăв Петр Йефремăвич

йулташ кандидатурине палăртнă

Трак районĕнчи, Упи йалсоветĕнчи „Йанмурзино" колхоз членĕсен суйлав умĕнхи пухуне 217 çын пухăннă. ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидат тăратасси çинчен сÿтсе-йавсан, пуху çапла йышăнат:

„Ианмурзино" колхоз членĕсен пухăвĕ йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИРЕН

1. Пирĕн колхоз председательне, комсомольца, 1914 çулта çуралнă çамрăк, Петр Йефремăвич Йефремăв йулташ колхоза çирĕплетессишĕн, сталинла вăйлă тырпул туса илессишĕн питĕ тăрăшса ĕçлет, вăл çак ĕçе туман колхозниксене, колхозницăсене пĕлсе организацилет. Çавăнпа та епĕр ăна Карай суйлав округĕ тăрăх ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата тăрататпăр.

2. Йефремăв йулташран ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйланма Карай суйлав округĕнче баллотировкăна тăма килĕшÿ пама ыйтатпăр. Карай суйлав округĕнчи суйлавçăсем Йефремăв йулташ кандидатуришĕн тăрĕç тесе, епĕр шанса тăратпăр.

Мăн-Сĕнтĕр суйлав округĕ

Тутаркас районĕнчи Шомикри „Колос" колхозри колхозниксемпе колхозницăсем Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама

Иосиф Виссарионович Сталин

тата

Зойă Ананйĕвнă Андрейĕвă

йулташсен кандидатурине палăртнă

Мăн Сĕнтĕр, майăн 18-мĕшĕ. (Телефонпа тăрăх). Майăн 17-мĕшĕнче Тутаркас районĕнчи „Колос" колхозри суйлавçăсен суйлав умĕнхи пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура 217 çын пулчĕ. Чи малтанах колхозри вăта стахановец, строительствă ĕçĕпе ĕçлекен Харитон Лукич Мочалов йулташ тухса каларĕ.

Мочалов йулташ сăмахĕ

Епĕр, йулташсем, ирĕклĕ те савăнăçлă пурнăçпа пурăнатпăр. Елĕкхи вăхăтра хăйăн пек савăнăçлă пурнăç пирĕн шухăшланă та май пулман. Хамăрăн телейлĕ пурнăçа Ленин—Сталин партийĕ йертсе пынипе çĕнсе илтĕмĕр. Епĕ Чăваш АССР Верховнăй Советне Мăн Сĕнтĕр суйлав округĕ тăрăх депутата суйлама пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен çулпуçне Иосиф Виссарионович Сталин йулташа кандидата тăратма сĕнетĕп. (Алă çупаççĕ).

Мочалов йулташ хыççăн колхозник Василий Петрович Йефремăв йулташ тухса каларĕ, вăл Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Зойă Ананйĕвнă Андрейĕвă йулташ кандидатурине сĕнет. Çак сĕнÿсене колхозниксем хапăл туса йышăнчĕç.

Тутаркас районĕнчи Шомикри „Колос" колхоз колхозникĕсен пухăвĕ йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИРЕН

Шомикри „Колос" колхозри колхозниксемпе колхозницăсен пухăвĕ Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидатсем палăртасси çинчен сÿтсе-йавнă хыççăн, çапла йышăнат:

„Колос" колхоз колхозникĕсен Чăваш АССР Верховнăй Советне Мăн Сĕнтĕр суйлав округĕ тăрăх депутата суйлама кандидата Ленин ĕçне, тĕрĕс туса пыракана, халăха вĕçĕмсĕр йуратакана, тăшмансемпе пĕр пĕлмесĕр кĕрешекене, пĕтĕм тĕнчери ĕçхалăхĕн çулпуçĕн, тĕнчери чи демократиле Конституцине туса пыракана, Иосиф Виссарионович Сталин йулташ кандидатурине тăрататпăр. Вăл йертсе пынипе пирĕн тăван çĕршыв вăйлă, нихăш çĕнеймен социализмла державă пулса тăчĕ.

Пĕрлехи пуху И. В. Сталин йулташран Мăн Сĕнтĕр суйлав округĕ тăрăх ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйланма баллотировкăна тăма килĕшÿ пама ыйтат.

Çавăн пекех епĕр, Шомикри „Колос" колхоз колхозникĕсем, Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Чăваш АССР Тĕнчестăвкомĕн председательне ССР Союзĕн Верховнăй Совет депутатне Зойă Ананйĕвнă Андрейĕвă йулташ кандидатурине палăртатпăр.

Зойă Ананйĕвнă Андрейĕвă йулташран Мăн Сĕнтĕр суйлав округĕ тăрăх ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйланма баллотировкăна тăма килĕшÿ пама ыйтатпăр.

Турхан суйлав округĕ

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Чапайĕв йачĕпе тăракан колхозри колхозниксем Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама

Андрей Михайлăвич Краснов

йулташ кандидатурине палăртнă

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Чапайĕв йачĕпе тăракан колхозри колхозниксен майăн 18-мĕшĕнче пулнă 155 çынлă пухăвĕ Турхан суйлав округĕ тăрăх ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидат палăртасси çинчен сÿтсе йавре. Пухури колхозниксем пурте пĕр саслăн пулса, Никанор Барнăв колхозник сĕннипе килĕшсе, ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама Йĕтĕрне районĕнчи „Крестьянская газета" колхоз председателĕн орденоносец Андрей Михайлăвич Краснов кандидатурине палăртрĕç.

Н. Барнăв йулташ сăмахĕ

Пирĕн умра питĕ пысăк задача тăрат, вăл—РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлавĕсене лайăх хатĕрленсе иртересси. Иунĕн 26-мĕшĕнче пирĕншĕн чаплă та аслă праçник пулат. Вăл кун епĕр Сталинла Конституци çине çырса хунă хамăрăн пысăк прававăна пурнăçлатпăр. Çапла ĕнтĕ епĕр, социализмла çĕршывра пурăнакансем, тĕнче нихăçан курман праваcемпе уса куратпăр. Ырă, савăнăçлă пурнăçпа пурăнатпăр. Çак пурнăçа пире Ленин—Сталин партийĕ туса панă. Çавна асра тытса, епĕ Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн черерен тăрăшакан çынна, хăйĕн пултарулăхне пĕтĕм халăха катартса панă çынна—Йĕтĕрне районĕнчи „Крестьянская газета" колхоз председательне, орденоносец Андрей Михайлăвич Краснов йулташа ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата палăртма сĕнетĕп.

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Чапайĕв йачĕпе тăракан колхоз колхозникĕсен суйлав умĕнхи пухăвĕнче йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИ

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата Чăваш республикинчи малта пыракан колхоз председателĕсенчен пĕрне,—орденоносеца, 1906 çулта çуралнă, ПСК(б) Парти членне, Йĕтĕрне районĕнчи Тури Ачакра пурăнат, Андрей Михайлăвич Краснов йулташа тарататпăр.

Чапайĕв йачĕпе тăракан колхоз колхозникĕсен пухăвĕ Андрей Михайлăвич Краснов йулташран ЧАССР Верховнăй Советне Турхан суйлав округĕ тăрăх депутата суйланма баллотировкăна тăма килĕшÿ пама ыйтат.

Хĕрлĕ Чутай суйлав округĕ

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Тарабайри „Агроном" колхоз колхозникĕсен пухăвĕ ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама

Лубовь Çеменăвнă Пољаковă

йулташ кандидатурине палăртнă

ХЕРЛĔ ЧУТАЙ (телефон тăрăх). Майăн 18-мĕшĕнче Тарабайри „Агроном" колхозри колхозниксен 225 çынлă пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура пĕр саслăн ЧАССР Верховнăй Советне Хĕрлĕ Чутай суйлав округĕ тăрăх депутата суйлама кандидата Хĕрлĕ Чутай районĕнчи „Красная Сормавă" колхозри йĕтĕн тавас йĕнĕпе ĕçлекен стахановка бригадăн бригадирне Лубовь Çеменăвнă Пољаковă йулташа палăртнă.

Тарабайри „Агроном" колхоз колхозникĕсемпе колхозницăсен пухăвĕнче йышăннă

РЕЗОЉУЦИ

Епĕр, Тарабайри „Агроном" колхоз членĕсем, Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата Хĕрлĕ Чутай суйлав округĕ тăрăх суйлама „Красная Сормавă" колхоз бригадирĕн, Лубовь Çеменăвнă Пољаковă йулташ кандидатурине палăртатпăр. Пољаковă йулташ колхозра техникăла културăсемпе ĕçлекен бригадăна йертсе пырат. Вăл партипе правительствă задачисене тăрăшса пурнăçласа пырат.

Пухура пулнă колхозниксем Л. Ç. Пољаковă йулташран Чăваш АССР Верховнăй Советне Хĕрлĕ Чутай суйлав округĕ тăрăх депутата суйланма баллотировкăна тăма килĕшÿ пама ыйтаççĕ.

Йăмаш суйлав округĕ

Шăхасан районĕнчи Вăрман Кипекри Куйбышĕв йачĕпе тăракан колхозри колхозниксен пухăвĕ ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама Уйкас Кипек йалсовет председателĕн

Андрей Иванович Иванов

кандидатурине тăратнă.

Пухура 145 çын пулнă

Шăхасан районĕнчи Куйбышĕв йачĕпе тăракан колхозра колхозниксен суйлав умĕнхи пухăвĕ пулса иртрĕ.

Колхозри стахановец Кирилăв йулташ çапла тухса каларĕ:

— Епĕ йалсовет руководителне Андрей Иванович йулташа ЧАССР Верховнăй Советне суйлама кандидата тăратма сĕнетĕп. Вăл 1930 çултанпа пирĕн колхоз членĕ пулса тăрат. Малтан 7 çул хушши бригадирта ĕçлесе, пĕлсе, тата тăрăшса ĕçленине катартрĕ. Халĕ вăл йертсе пыракан йалсоветĕ районра малта пыракан йалсовет шутланса тăрат. Иванов пултаруллă организатăр.

Шăхасан районĕнчи Вăрман Кипекри Куйбышĕв йачĕпе тăракан колхозри колхозниксен пухăвĕ йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИ

Колхозниксен пĕрлехи пухăвĕ ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата Уйкас Кипек йалсовет председательне Андрей Иванович Иванова 1903 çулта çуралнă, парти кандидатнĕ, тăратат.

Пуху Иванов йулташран ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйланма Йамаш суйлав округĕ тăрăх баллотировкăна тăма килĕшÿ пама ыйтат.

Штанаш суйлав округĕ

Буденный йачĕпе тăракан колхоз колхозникĕсен суйлав умĕнхи пухăвĕ ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама

Алексей Çергейĕвич Толстов

кандидатурине палăртнă

ХЕРЛĔ ЧУТАЙ. Буденный йачĕпе тăракан колхозри колхозниксен суйлав умĕнхи пухăвĕ майăн 18 мĕшĕнче пулса иртрĕ. Пухура 225 çын пулчĕ. Пухăва пынă суйлавçăсем Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидат палăртас ыйтăва сÿтсе йаврĕç. Колхозниксем Федăрăв, Китайĕв йулташсен сĕнĕвĕпе килĕшсе, ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама ПСК(б)П Хĕрлĕ Чутай райкомĕн секретарĕн Алексей Çергейĕвич Толстов йулташ кандидатурине тăратрĕç.

Буденный йачĕпе тăракан колхоз колхозникĕсен пухăвĕ йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИ

ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидат палăртасси çинчен сÿтсе йавнă хыççăн, Буденный йачĕпе тăракан колхоз колхозникĕсен пухăвĕ çапла йышăнат:

ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата ПСК(б) Парти Хĕрлĕ Чутай райкомĕн секретарне Алексей Çергейĕвич Толстов йулташа,—ПСК(б) Парти членнĕ, 1903 çулта çуралнă,—тăратас.

Колхозниксемпе колхозницăсен пухăвĕ А. Ç. Толстов йулташран ЧАССР Верховнăй Советне депутата Штанаш суйлав округĕ тăрăх суйланма баллотировкăна тăма килĕшÿ пама ыйтат.

ПАРТИ ПУРНĂÇӖ

ПСК(б)П Обком отчотне пысăк активлăхпа сӳтсе-йаваççӗ

КАНАШ. Парторганизацин районти пухăвӗ майăн 17-мӗшӗнче уçăлчӗ. Парти Чăваш Обкомӗн ӗçӗсем çинчен З. А. Андрейӗвă йулташ доклад турӗ. Доклад тăрăх 22 çын тухса каларӗç.

ПСК(б)П Чăваш организацийӗ парти Тӗпкомӗн 1937 çулхи, февраль-мартра тата 1938 çулхи йанвар уйăхӗнче пулса иртнӗ пленумӗсен решенийӗсемпе хӗçпăшалланса, хăйӗн речӗсене халăх тăшманӗсенчен — троцкисла-бухаринла тата буржуалă-националисла шпионсенчен, сăтăрçăсенчен, диверсантсенчен тасатас тӗлӗшпе пысăк ӗçсем туса иртерчӗ. ПСК(б)П Чăваш организацийӗ нихăçанхинчен ытларах тӗреклӗнчӗ, ПСК(б)П Тӗпкомӗ тавра, ӗççынисен çулпуçӗ Сталин йулташ тавра татах та çирӗппӗн пӗтӗçрӗ. Парти масси политикă йенчен ӳссе çирӗпленчӗ, вӗсен политикла сыхăлăхӗ, политикла тата производствăлă активлăхӗ нихăçанхинчен ытла ӳсрӗ, парти, совет хуçалăх руководствине Ленин—Сталин парти ӗçӗшӗн чӗререн тăрăшакан, кӗрешӳре ӗçре тӗреклӗннӗ çирӗп, çӗнӗ кадрсем çӗршерӗн пычӗç.

ПСК(б)П Чăваш организацийӗ ССРС Верховнăй Совет суйлавӗнче ӗççынисен политикăла активлăхне пуçарса пычӗ, суйлавра коммуниссемпе партире марриссен Сталинла блокӗ çӗнтерчӗ, суйлавçăсенчен 97,2 процент суйлава хутшăнчӗç. Парти речӗсене, совет, хуçалăх руководствине халăх тăшманӗсенчен тасатса, парти чăваш организацийӗ промышлӗннăç, йалхуçалăх, культурă строительствинче тата ӗççынисен пурнăçне татах та пуйан, татах та культурăлă тăвас тӗлӗшпе пысăк ӗçсем туса иртерчӗ.

Обком отчочӗ тăрăх тухса калакансем, ПСК(б)П Чăваш Обкомӗн ӗçӗсене тивӗçлипе çакăн пек хак парса, Обкомăн кулленхи ӗçӗсенчи ситменлӗхсене тӗплӗн тишкӗрсе хытă тата хăйулăн критиклӗрӗç, аван сӗнӳсем пачӗç. Тухса калакансенчен пӗр вывăд тумала: — парти масси социалисăм строительствинче пысăк çӗнтерӳсем тăвассишӗн тата вăйлăрах, пӗтӗм хастарлăхпа паттăрăн кӗрешессишӗн, парти Обкомне пулăшас-шăн.

Канашри промышлӗннăçла предприйатисенче, транспăртра, уйрăмах — Культпромсойуз, Лесӓромсойуз çистемисене кӗрекен ертелсенче халăх тăшманӗсен сăтăрла ӗçӗсен йулашкисене пӗтерес ӗçе питӗ вăраххăн пырат. Ертелсенче производствă тата чӗрӗ тавар тăратас плансене пăтраштарса параççӗ, кадрсене хатӗрлесе упрамаççӗ, ӗçпе пурнăç условисене лайăхлатасшăн пур майсене пурнăçламаççӗ.

Обкомăн промышлӗннăçпа транспăрт пайӗ вырăнти парти организацисемпе тачă çыхăну тытмаст, предприйатисенче транспăртра сахал пулат, партилӗ-массăлă ӗçе лайăхлатма пулăшмаст, парти решенисене вырăнта мӗнле пурнăçланине тӗрӗслемест.

Халăх тăшманӗсем суту-илӳ ӗçӗнче сăтăрла ӗçсем нумай тунă. Чăвашсойуз, Чăвашторг, Шалти суту-илӳ Халăх Комиссариачӗ руководстви тата вӗсен вырăнти оргăнӗсем халăх тăшманӗсен сăтăрла ӗçӗсен йулашкийӗсене хăвăрт пӗтерсе суту-илӳ ӗçне лайăхлатасшăн пулнине кăтартмарӗç-ха. Тавар çавăрнăшне пăтраштарса планлани, ревизи комиссен ӗçӗсене йухăнтарни, вӗсем ӗççыннисенчен уйăрăлса, массăна контроль ӗçне йавăçтарманни, суту-илӳ оргăнӗсен аппаратне иртсе-çӳрен, тӗрӗслемвен çынсене илни, çавна пула растратă, халăх пурлăхне çаратни халӗ те тăсăлса пырать. ПСК(б)П Обкомӗн советпа суту-илӳ пайӗн çак ыйтусем çине хытăрах пăхмала.

Канашра йалхуçалăх механизаци шкулӗ пур, унтан республикă валли çӗршер шофӗрсем, комбайнерсем вӗрентсе кăлараççӗ. Вӗсене вӗрентме базă çителӗксӗр, вӗренме йурăхлă автомашинăпа комбайн çук. Нумайăх пулмаст Канашра елеватăр туса пӗтерчӗ. Купа ӗçлеме пӗлекен çынсем çук, кирлӗ кадрсене хатӗрлемеççӗ. Елеватăрта халӗ пӗр çын та çук, вăл хуçасăр.

Обкомăн культурăпа шкул, парти пропагандипе агитаци, парти оргăнӗсен йертсе пыракан пайӗсем вырăнти работниксене ӗçре çителӗксӗр пулăшнине, партин пуçламӗш организацисемпе тата уйрăм коммуниссемпе куллен çывăх çыхăну тытманнине, вырăнти работниксен паха опычӗсене пурне те тивӗç тăвас тӗлӗшпе сахал ӗçленине критиклерӗç.

З. А. Андрейӗвă йулташăн йулашки сăмахне итленӗ хыççăн — ПСК(б)П Обком ӗçне çителӗклӗ, политикла сулне тӗрӗс, тесе хак пачӗ пуху.

Майăн 18-мӗшӗнче, касхи ларура, райком секретарӗ Майорăв йулташ ПСК(б)П райкомӗн ӗçӗсем çинчен отчотлă доклад, ревизи комиссийӗ ӗçӗсем çинчен И. М. Захватăв йулташ доклад турӗç. Доклад хыççăн тухса каласма 43 çын çырăннă, пайан прени пырат.

* О *

КАНАШ, майăн 20-мӗшӗ. (Телефон тăрăх). Коммуниссен районри отчотпа суйлав пухăвӗ икӗ кун хушши ПСК(б)П райком отчотне сӳтсе-йаврӗ. Канаш райкомӗ районри парторганизацине халăх тăшманӗсенчен тасатас тӗлӗшпе пысăк ӗçсем тунă — вăхăтрах, йанăшсем те нумай тунă. Канаш станцинчи коммуниссенчен 70 процентне „шанчăксăр“ çынсен хисепне кӗртнӗ. Çамрăк учитӗл Артемйӗв йулташа халăх тăшманӗсене пулăшат тесе, айăплама материал пулман пулин те, ăна парти кандидатӗнчен кăларнă. Партирен кăларсан, Артемйӗв йулташ ПСК(б)П райкомне канаш ыйтма пынă. Райком çекретарӗ пулнă Федотăв йулташ ăна райкомран хăваласа кăларса йанă. Халӗ ăна парти ретне илнӗ, анчах райком ун çинчен маннă, ăна районри отчотпа суйлав пухăвне те чӗнмен. Райком йанăшӗсене вăрахăн тӳрлетсе пырат. Райком çекретарӗ Майорăв коммуниссене партирен кăларнă чух вӗсем çине çийелтен пăхнă, коммуниссен тӳрӗ сăмахӗсене итлемен. „Партирен кăларас пулат, йанăш тусан Обком тӳрлетет“ тенӗ шухăшпа ӗçленӗ.

Парти ретне илес, парти вӗренӗвне йӗркелес, парти пуçламӗш организацисене ӗçпе пулăшас тӗлӗшпе райком йапăх ӗçленӗ. Парти активӗ çителӗксӗр вӗренет, райком пысăк ыйтусемпе лекцисем иртермест. Коммуниссем районри парти кабинетӗнчен кирлӗ пулăшу илеймеççӗ. Уйрăм коммуниссемпе, сочувствуйушчисемпе ӗçлессине, вӗсен вӗренӳне, вӗсене пулăшас ӗçе йухăнтарса йанă. ПСК(б)П райкомӗ хăйӗн ларăвӗнче сӳтсе-йавас ыйтусене малтан тӗплӗн тӗрӗслесе хатӗрлемен, партин пуçламӗш организацисен пухăвӗсем йышăннă постановленисене пурнăçланине тӗрӗслесе пыман. Парторг Пулдышӗв йулаш нумай вăхăтлăха командировкăна тухса кайнă чух парторганизаци документсене Куçмин йулташ аллине парса, Узаринă йултăша пама хушнă. Узаринă йулташ Мартынăв йултăша, Мартынăв Чекуров йултăша пама хушнă. Вӗсем нихăшӗ те парти документсене йышăнман. Халӗ ку документсем укçа йешчӗкӗнче хуçасăр выртаççӗ. Банкри парторг Алгашăв йулташ партине кӗме хатӗрленнӗ Патков йултăшăн документсене çухатнă. Халӗ ку документсене клубра тупнă.

ССР Сойузӗн Верховнăй Совет суйлавӗнче палăрнă актива нумайӗшне çухатнă. Вӗсене халӗхи суйлав ӗçне йавăçтарман. Суйлав кунне хатӗрленес ӗç çителӗксӗр, хăшпӗр çерте округри тата участкăри суйлав комиççисен составне представителсем сӗннӗ чух, суйлав саккунне пăснисем те пулнă.

Апла пулин те, райком çав çитменлӗхсене вăхăтра пӗтермен.

Райком отчочӗ тăрăх тухса калама 58 çын çыраннă, 35 тухса каланă. Пуху ПСК(б)П райком ӗçне çителӗклӗ, тесе хак пачӗ.

Пайан райком пленумӗпе ревизи комиççи членӗсене, тата партин облăç конференцине делегатсем суйлама кандидатсем тăратса, кашнине уйрăмăн сӳтсе-йавма пуçларӗç.

М. Йакимăв.

Коммуниссем райкома мӗншӗн критиклеççӗ

ÇӖРПУ (хамăр корр.). Çӗрпӳ районӗнчи коммуниссен пухăвӗ икӗ кун хушши (майăн 17-мӗшӗнче 18-мӗшӗнче) райком отчотне райком секретарӗ Агейӗв йулташ тунă доклада сӳтсе-йаврӗ. Прение 38 çын тухса каларӗç, — çакăнтан ӗнтӗ коммуниссен активлăхӗ пысăкки курăнса тăрать. Тухса калакан йулташсем пурте райком, районри парторганизаци партилӗ-политикăлă ӗçсене чылайах лайăхлатнине, халăх тăшманӗсене — троцкисла - бухаринла, национала - фашисла бандитсене тăпăлтарса тӗлӗшпе пысăк ӗçсем туннине палăртрӗç, çыхăнса тата ытларах вăйлатма кирли çинчен каларӗç.

Мӗншӗн критиклеççӗ-ха коммуниссем райкома?

— Парти ретне илессине çителӗксӗр туса пынă, — кун çинчен нумай йулташсем каларӗç.

Чăн та. Çӗрпӳ районӗнчи организацире 1937 çулта 1 çынна çеç парти кандидатне илнӗ; 1938 çулта кӗçӗрнипе 20 çынна парти кандидатне илнӗ; 10 çынна кандидатран члена кусарнă. Çӗрпӳ районӗнчи йалсенче пуçламăш парторганизацисем пӗрре те çук (район центрӗнче 8 пуçламăш организаци). Паллах, ку вăл пит пысăк çитменлӗх.

Колхозник - ударниксене, стахановецсене, трактăрисене, комбайнерсене, комсомолецсене, ӗçре ӳссе çитӗннӗ, тӗресленнӗ, Ленин — Сталин партине чӗтӗм чӗререн тăракан çынсене парти ретне илес ӗçе райкомăн вăйлатмала, çакăн пек пулчӗ пухура калакан йулташсен сӗнӗвӗ.

Райком отчотӗнче пропагандиссен ӗçӗсене хак парса тухни пулмарӗ. Парткабинет пропагандиссене çителӗклӗ пулăшса пымаст, пропсеминарсем кирлӗ пек иртмеççӗ (Шаготăв й.).

Райкомăн малашне парти вӗренӗвӗн пахалăхне лайăхлатас тӗлӗшпе çине тăрса ӗçлемеле пулат.

Совет, хуçалăх тата суту-илӳ организацисенче сăтăрлăх сийенӗсене пӗтерессишӗн кӗрешме кирли çинчен чылай йулташсем тухса каларӗç. Анчах пурте пекех пӳтӗмӗшлӗ калаççӗ. Сăмахран, районри çӗрӗç пайӗнех илес, Халăх тăшманӗсем йалхуçалăх йенӗпе уйрăмах нумай сăтăр тунă. Мӗнле пырат-ха сăтăрлăх сийенӗсене пӗтерессн? — Çителӗксӗр. Йалхуçалăх уставне пăснисем, фермăсенче выльăх-чӗрлӗхсем вилни халь те саплах пулаççӗ.

— Райӗçтавком иртнӗ вăхăтра йышăннă саккунсăр постановленисене те (клевӗре сайра акасси çинчен, колхозсен вăйӗпе района валли гăраж тăвасси çинчен) пăрахăçа кăларман-ха (Григорйӗв й.).

Сăтăрлăх сийенӗсене пур ӗçре те татăклăн пӗтерсе пымала тесе пухура сивӗччӗн каласа хăварни, паллах, пит тӗрӗс.

Райком отчотне хӗрӳллӗ сӳтсе-йавса, коммуниссем малашнехи ӗç валли усăлă та хаклă сӗнӳсем нумай парса хăварчӗç.

Райкомăн малашнехи ӗç планне çав сӗнӳсене шута илсе тăвас пулат.

**

Районри коммуниссен пухăвӗ райком çителӗклӗ ӗçленӗ, унăн политикăлă çулйӗрӗ тӗрӗс пулнă, тесе йышăнчӗ. Райкома 9 членран суйласа хăварчӗ.

Агейӗв йултăша пӗрремӗш çекретаре, **Никанорăв** йултăша иккӗмӗш çекретаре суйланă.

Ф. Александрăв.

Вулав çурчӗн паха ӗçӗсем

Калайкасси (Тутаркас р.) йалсоветӗнчи вулав çурчӗ, унти клубсем тата хӗрлӗ кӗтессем иртнӗ суйлав кампанине лайăх ӗçлерӗç. Халӗ РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечӗсене суйлама хатӗрленеççӗ.

Йалсоветӗнче 14 кружок ӗçлет, кашни кружокрах 7-шӗр заньяти туса иртерӗ. Заньятисенче вӗрентме кайиччен агитаторсем пурте кашни темăпах семинарсенче пулаççӗ. Семинара учительницă Казакова йулташ йӗртсе пырать. Ситăлăла Конституцине РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечӗсен суйлав Положенийӗсене вӗренме йалсоветри активиссене 82 çынна бригадăсем, звеносем тата уйрăм хуçалăхсем çумне çирӗплетнӗ. Суйлавçăсене пурне те (857 суйлавçăна) суйлав саккунӗсене вӗренме кружоксене йавăçтарнă. Колхозсенчи кашни бригадăрах вулавçăсем ӗçлеççӗ. Вӗсем колхозниксене тӗнчери лару-тăру ыйтăвӗсене, партипе правительствăн постановленийӗсем, РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечӗсен суйлавӗ çинчен ăнлантараççӗ.

Çураки вăхăтӗнче 12 бригадăра пурӗ 60 хут каласу иртерсе, тӗрлӗрен хаçат-журналсем вуласа панă.

Колхозсенче тата бригадăсенче стена хаçачӗсене йӗркеллӗ кăларса тăраççӗ. Çураки вăхăтӗнче колхозсенче 7 номер, бригадăсенче 12 номӗр стена хаçачӗ кăларнă.

Вулав çурчӗн пуçлăхӗ йалсоветри активпа йӗркеллӗ ӗçлесе пырать.

Калайкасри вулав çурчӗ Шомик йалсоветӗнчи вулав çурчӗпе ăмăртать. Халӗ Шомикри вулав çурчӗ йулса пырат-ха. Вулав çурчӗн пуçлăхӗ Кӳçмин йулташ обчăлă ӗçе сахал хутшăнать, унта суйлав Положенийӗсене вӗренесси те йапăх пырать.

Калайкасри вулав çурчӗ суйлав тӗлне хут пӗлменнисене пӗтересси-пе те чылай ӗçсем тунă. Майăн 1-мӗшне йалсовета кӗрекен 5 йалти хут пӗлменнисене пурне те çитӗннисен шкулӗсенчен вӗрентсе кăларнă. Халӗ Куракассинчи çитӗннисен шкулӗнче 10 çын вӗренеççӗ. Вӗсене РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечӗсен суйлавӗ тӗлне вӗрентсе кăлараççӗ.

Воронăв.

Суйлав участкисенче çыхăну ӗçне йӗркелемеле

Йетӗрне районӗнче РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечӗсен суйлавӗсене интерес тӗлӗшпе ӗçлекен участкăсенчи суйлав комиççисене организацилесе çитерчӗç. Хучаш суйлав округне 13 суйлав участки кӗрет, вӗсенчен 6403 суйлавçă.

Халӗ йалсоветсенче суйлавçăсен спискисене туса хатӗрлес ӗç пырат. Анчах та çак ӗçе пур çерте те тимлӗн туса пыни çук-ха. Лапракасси йалсоветӗнче 61 суйлавçăнне хушамачӗсене анчах çырнă, ашшӗ йачӗпе хăйсен йачӗсене çырман. 1920 çулта çуралнисене документсем тăрăх тӗрӗслесе, 18 çул тултарнисене спискă çине кӗртесси пуçланман та.

Хучаш суйлав округӗнче çыхăну ӗçӗ йапăх. Округри 13 суйлав участкинчен 6 участкăра телефонсем çук. Телефонсем пур çерте те çыхăну тытма питӗ йавăр, хăшпӗр суйлав участкисемпе виçӗ телефон станцийӗ урлă каласма тивет. Райӗçтавком тата районри çыхăну уйрăм çыхăну ӗçне лайăхлатас тӗлӗшпе çителӗксӗр ӗçлеççӗ.

Хучаш суйлав округӗнчи комиççи çекретарӗ
Р. Митрйаков.

Участкăри суйлав комиççинче ӗçлекенсен канашлăвӗ

СЕНТӖРВĂРРИ. (Телефон тăрăх). Майăн 20-мӗшӗнче участкăри суйлав комиççи председателӗсен, председател заместителӗсен тата çекретарӗсен канашлăвӗ пулчӗ. Унта участкăсенчи суйлав комиççийӗсем умӗнче тăракан задачсем çинчен, суйлав документсене мӗнле йӗркелемели çинчен сӳтсе-йаврӗç.

Канашлура хăшпӗр йалсенче (Новинскинче т. ыт. те) ССР Сойузӗн Верховнăй Советне суйланă чухне хатӗрленӗ суйлав пулӗмӗсен хатӗрӗсене салатса йани палăрчӗ. Районри суту-илӳ организацисем суйлав кунне йапăх хатӗрленнине те кăтартса хăварчӗ канашлу. Чылай йалпо лавкисенче (Кушнаркасси, Камайӗвă т. ыт. те) суйлав литератури çук. Сӗнтӗрвăрри хулинче те суйлав çинчен çырнă плакатсемпе лозунгсем, картинсем курăнмаççӗ. Суйлав кунӗччен хулана йӗркене кӳртес тӗлӗшпе хула совечӗ протоколсем çырнисӗр пуçне нимӗн те туман.

Пр. Сатур.

Зайом кампанине вăхăтра вӗçлер

Правительствă йышăннă тăрăх, „ССР Сойузӗн Оборонине тӗреклетмели зайомăн“ малтанхи выльăвӗ ийунӗн 5—6-мӗш кунӗсенче пулса иртет. Çавăнпа та зайом илме çырăннисене облигацисем парасси, укçа пухса пӗтерессн — кӗске вăхăтра туса ирттермели ӗçсем.

Предприйатисемпе учреждениссенче ӗçлекен бухгалтерисен ийунӗн 1-мӗшӗ тӗлне зайом мӗн чухлӗ çыраннн тата облигацисене валеççе пани çинчен перекет кассисене отчотсем тăратмала.

Шупашкар хули тăрăх илсен, хăшпӗр учреждениссемпе предприйатисенчи бухгалтерисемпе комсодсем çителӗксӗр ӗçленине пула, „ССР Сойузӗн Оборонине тӗреклетмели зайом“ кампанийӗ çителӗклӗ вӗçленеймест-ха. Пайан Шупашкар хулинчи 41 учреждени тăрăх илсен, зайом илме çыраннисенчен укçа пухса çитермен, перекет кассисенчен облигацисем илмен.

Кириллăв.

Трак районӗнчи парторганизацин пухăвӗ

ТРАК, майăн 20-мӗш (телефон тăрăх). Пайан районри парторганизацин отчотпа суйлав пухăвӗ уçăлчӗ. Пухăва парти членӗсем пурте килнӗ, 24 кандидатран 21-шӗ пынă.

Малтанхи ыйтупа ПСК(б)П Обкомӗн ӗçӗсем çинчен Обком бӳро членӗ Н. М. Çеменăв йулташ доклад туса пачӗ. Унăн доклачӗ икӗ сехет тăсăлчӗ.

Отчот пӗтнӗ хыççăн, коммуниссем нумай ыйтусем пачӗç.

—Пропагандиссен кадрӗсене хатӗрлес тӗлӗшпе Обком мӗнле ӗçсем тума йышăннă?

—Мӗншӗн Обком инструктăрӗсем районсенче сахал пулаççӗ?

—Трак районӗнче заочнă вӗренессине мӗншӗн организацилемен?

Çакăн пек ыйтусем параççӗ коммуниссем Обком отчотне итленӗ хыççăн.

Райком йалтан килекен коммуниссене лайăх кӗтсе илчӗ. Вӗсене выртса тăма çурт, койкăсем, тӳшексем тата ачалă коммунискăсене валли йаслӗ хатӗрленӗ.

Майăн 21-мӗшӗнче Обком отчочӗ тăрăх пренисем пуçланчӗç.

ПСК(б)П Трак райкомӗн
çекретарӗ **Закамский.**

Пупсемпе кулаксен Микул турри

Ӗненекен чăвашсем „Микул турă“ тесе хисеплекен „светуй“ Николай пурнăçӗ çинчен пупсем çырнă кӗнекесене йӗрлесе пăхсассăн, вăл пусмăрлакан классен турри пулнине уççăнах куратпăр.

Николайăн ашшӗне амăшӗ (Феофанпа Нонна) шутсăрах пуйан çынсем пулнă. Ашшӗ-амăшӗ пуйанне кура, Николай çамрăклах йепискăп вырăнне кӗрсе, чиркӳсемпе пупсене хăй аллинче тытса усракан пуçлăх пулса тăрат.

Унăн пурнăçӗ çинчен калакан кӗнеке тăрăх, пӗр панкрута тухнă хуçа патне виçӗ хутчен ылттăн хутаççи кайса пăрахнă вăл, хăй пекех пуйан „чаплă“ çынăн йачӗ ан çӗртӗр тесе, ăна хăтарас тесе, виçӗ хутаç ылттăн шеллемен вăл. Çав вăхăтрах чухăн-чурасем çине мӗнле куçпа пăхнă-ши вăл?

Асăннă вăхăтра Рим патшалăхӗ пусмăрне кӗрсе ӳкнӗ Фриги çӗрӗнче вăйлă восстани пуçланса кайнă. Вăл восстанийе пусарма Рим патши Александр виçӗ çар йанă пулнă. Çар пуçлăхӗсем виççӗш те çав „таса“ Николай патне кӗрсе пит пысăк хăна пулаççӗ. Вӗсене йепискăп Николай восстанийе лăплантарма хăй аллипе пиллесе йарат. Çапла ӗнтӗ експлоататăрсен йепискăпӗ Рим патшалăхӗ пусмăрӗнчен хăтăлас тӗлӗшпе кӗрешекен чурасене пиллемен, чурасене тӳсме çук йăвăр пусмăрлăхра усраса, çаратса пурăнакансен хутне кӗрсе, чурасемпе чухăнсене вӗлерме кайакан çарсене пиллесе йанă...

Киремет вырăнне— Микул турă

Нумай ӗмӗрсем иртсессӗн, патша хушнипе чăваш хушшинче христос тӗнне сарас тӗлӗшпе ӗçлекен пупсем—миççионерсем кураймa пуçлаççӗ. Миççионерсем, кашни халăхăн кивӗ тӗнӗсенчи туррисем вырăнне, мӗнле те пулин çветуй тупса парса, ăна пăхăнса пурăнма вӗрентме тытăнаççӗ. Çапла майпа киремет вырăнне çав асăннă Микул турра кăларса тăратаççӗ.

Миççионерсемпе патша тарçисем киремет вырăнӗсене çӗмӗрсе тăкса, вӗсен вырăнне чиркӳсем лартма тытăнаççӗ. Çапла вара вӗсем халăх кириметсене чӳклеме пухăннă вырăнсенчен чиркӳ йалисене тăвакан вырăнсем тума тăрăшса ӗçлеççӗ. „Хăватсем тăвакан“ турăшсене те çавăн пек халăх нумайрах пухăнакан киремет вăрманӗсемпе вырăнӗсене вырнаçтарса пыраççӗ.

Микул турă—кулаксен сутйи

Тӗне кӗнӗ чăвашсем валли Шупашкарти арçын мăнастырӗнче, Микул турăн сăнне хăма çине ӳкерсе мар, кӗлетке—идăл туса лартнă. Идăлӗ сылтăм аллине хӗç тытнă, сулахай аллине чиркӳ,— хăрăр манран; чиркӳ хушнине итлесе, пусмăрлакансене хирӗç ан тăрăр, ахалӗн сире хӗçпе касса вӗлерӗп, тенӗ пекех.

Çав идăла пуççапма чăвашсемпе марийӗцсем мăнастире пит нумайăн çӳренӗ. Пуринчен ытларах çӗр пирки тухакан тавлашусене çав идăл умӗнче татма йуратнă кулаксем. Кулак мăнастире укçа нумайрах парат те, çуртисене те пысăкраххине лартат те, вара Микул турă-сутйе унăн майлă пулат. Пит чейе механикăпа тытăнса тăнă çав идăл турăн чапӗ.

Ишекри Микул турă

1740 çулсенче Ишлей районӗнчи Ишек те Микул турă сăнне Никулин хуçапа Йон Филиппăв пуп туртса кăлараççӗ. Тӗлӗкре курăнса тупăннăскер ку тӗлӗнмели хăватсем тума пултарат, тесе улталаса ӗнентерме тытăнаççӗ. Пӗр Сараккей йатлă паллă вăрă-жулик турăш „хăватсем тунисем“ çинчен каласа çӳреме хăйсене хăйсем ухмах вырăнне хуракан çынсене укçа парсах йалсем тăрăх кăлара-кăлара йарат. Тăрăшни харама каймаст. Ишеке 200—300 çухрăмран Микул турра пуççапма çӳреме тытăнаççӗ.

Пупсем пуйаççӗ. Ишек чиркӳвӗ халăх укçине крушкăпа пуçтарса тата-çурта сутса 1906 çулта 18.431 тенкӗ укçа пухнă (унти пупсемпе чиркӳ старăстисем пӗрпӗринчен вăрттăн вăрла-вăрла йулнă укçасем ку шута кӗреймен). Чиркӳ старăсти хăйӗн хӗрне качча панă чухне Атăл тăрăх çӳрекен чи пысăк пăрахутах, туй тума тесе, тара илме пултарнă мӗн.

Ринка салинчи тата ытти вырăнсенчи Микул турăсем

Çывăхри саласенчи пупсемпе кулаксем те, Ишеке ытлашши нумай укçа пухăнса кайнипе кӗвӗçсе, Ишекри пек „хăватсем тăвакан“ Микул турăсем шухăшласа кăларма тытăнаççӗ. Ишеке кайакан çулсем çинче ларакан саласенче, сăмахран Ринкă салинче, Пайкилтинра, Чемейре, Шăхасанта, т. ыт. вырăнсенче „хăватсем тăвакан“ турăшсем тупăнаççӗ. Вӗсен центрӗ — Ишек пулса тăрат.

Ишекпе Ринкă салисен чăпӗсене сарма чăваш йумăçӗсем те чылай пулăшса тăраччӗç. Трахомпа, кӗçӗпе, йухан-суранпа, çифилиспа, туберкулёзпа тата йерекен ытти усал чирсемпе чирлесен: савăн Ишеке „çичӗ çурта лартма“, „вуник çурта лартма“ каймала, тесе хӗтӗрсе йараччӗç. Мӗн чухлӗ чир пырачче пулӗ Ишеке çапла майпа!

1927 çулта Ишек польницинчи Афанаçйӗв тухтăр сăнана тăрăх, Ишекрен 3—4 çухрăмра ларакан Çатра Маркара (унта кӗлле çӳрекенсем валли постойалăй дворсем пулнă) пӗтӗм халăхăн 88 проценчӗ трахомлă, 24 проценчӗ çифилислă пулнă.

Промзино салинчи Микул турă

Промзино сали Улатăртан 60 çухрăмра ларат. Унти Микул турă сăнне пуççапма чăвашсем, марийӗцсем, мордвасем темиçе çӗршер çухрăмранах пырса çӳренӗ. Октабӗр революцийӗн 14-мӗш çулӗнче те, пӗр 4 кун хушшинче, çав Промзино салинчи Микул турра пуççапмах 40 пин çын пырса кайнă мӗн.

Вăл иконăн историйӗ çапла вара. 1553 çулта Иван Грознăй патша Промзă шывӗ хӗрринче хула туса хунă. Çавна тунă хыççăн, пӗр 50 çул кайран, улпутсен пусмăрне тӳсеймен хресченсем Улатăр уйесӗнче восстани пуçарса йанă. Восстани виçӗ çул хушши тăсăлнă. Виçӗ çулран аран-аран çӗрулпучӗсемпе вӗсен çарӗсем во станийе сӳнтерсе лартаççӗ. Анчах тӗппипех сӳнтерейменççӗ. 1614-мӗш çулта хресченсем каллех çӗнӗ восстани кăларса йараççӗ.

Восстани тăвакансен 20 пин çынлă çарне Зарудскипе Шчербаков атамансем питех те тӗреклӗн йертсе пыраççӗ.

Çав вăхăтра патша хыснинчен пит нумай укçа илнӗ пуп тавраш-сем Улатăр уйесӗнче 12 мăнастир, 12 чиркӳ туса лартаççӗ. Восстани тавакансене турăпа хăратма тытăнаççӗ, тӗне кӗмен чăвашсене, мордвасене, марийӗцсене христос тӗнне кӗртме тăрăшаççӗ.

Восстани çаплах сарăлса пырат. Вара, улпутсемпе хресченсем хушшинчи çапăçу калама çук тӗреклӗн хӗрӳленсе кайнă вăхăтра, Промзино патӗнчи „Шурă сăрт“ çине пуп таврашсем вăрттăн Микул турă сăнне пăрахса хăвараççӗ. „Хăватсем тăвакан турăш ку“ тесе суйса çӳреме тытăнаççӗ.

Çав Микул турăпа хресченсен ăстăнне анкăминкӗлетнӗ пиркийех вара, Маттушкин çар пуçлăхӗ вуншар пин хресченсене хӗнесе, вӗсенчен нумайӗшне вӗлерттерсе тухса, восстанийе пӗтерсе хурат.

Çав Микул турă йачӗпех Разинпа Пугачов отрйачӗсенче пулнă хресченсене çӗршерӗн пере-пере вӗлереççӗ; 1736 çулта „еретик“ тесе, Йарăв революционера çунтарса йараççӗ; 1905—1906 çулсенче тарса çӳрекен революционерсене тытса касмăкласа, Çӗпӗре йарса тăнă, вӗсенчен нумайӗшне вӗлернӗ. Микул турă йачӗпех Промзино салинче 1917 çулта совета хирӗçле демонстрацисем тума пуп таврашсемпе кулаксем турăшсем йатса тухнă.

Ишекпе Промзинори тата ытти саласенчи Микул турă сăнӗсемпе витӗнсе тунă тискер, ӗççыннисемшӗн сийенлӗ ӗç-пуçсене каласа та пӗтерес çук...

Микула турра хисеплес, ăна пуççапас, унăн праçникне уйавлас йăлана хамăр хушăран тӗппипех кăларса пăрахар. Микул турра хисеплеме хушакан пуп таврашсем ӗмӗртен-ӗмӗрех експлоататăрсен классемшӗн çеç ӗçлесе пырса, ӗççыннисене мӗн чухлӗ асап, хӗн-хур, пусмăр кăтартса пурăннине асран нихçан та йарар мар. Пупсемпе тӗн тарçисем вăрттăн пăшăлтатса çӳренисене итлемесӗр, РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечӗсене депутата суйлама кандидата халăхăн чи лайăх ывăлӗсемпе хӗрӗсене, Ленин—Сталин ӗçӗшӗн, рабочисемпе хресченсен ӗçӗшӗн, коммунисăм ӗçӗшӗн пӗтӗм вăйсене хурса кӗрешекенсене тăратăр, коммуниссемпе партире тăманнисен сталинла блокне тата ытларах çирӗплетсе йарар.

И. Иллариус.

Учот тата планлас ĕçе çÿлĕ вырăна лартмала

1937 çулта пирĕн Чăваш республикĕ хуçалăхпа культурă строительствин пур отраçлĕсенче те пысăк ÿсĕмсем турĕ.

Çавăнпа пĕрлех 1937 çулта Чăваш республикин халăх хуçалăх планне тултарас тĕлĕшпе хăшпĕр отраçлĕсенче пысăк прорывсем пулнине Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕн Х-мĕш Çессийĕ палăртса хăварчĕ. Уйрăмăнах: финанс, суту-илÿ, вырăнти промышленнăç ĕçĕсем йулса пынă. Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕн Х-мĕш Çессийĕ халăх хуçалăхĕн 1938 çулхи планне йышăннă чух, хуçалăх организацийĕсен руководительĕсен умне пысăк тата ответлă задачăсем лартрĕ. 1938 çулхи Чăваш республикин бюджечĕ 1937 çулхи бюджетпа танлаштарсан 15.351,9 пин тенкĕ чухлĕ пысăкрах.

Çакăн пек политикăлă пысăк задачăна большевикла пурнăçласа çĕрте учот тата план ĕçĕ пысăкран та пысăк вырăн йышăнать. Апла пулин те республикăри хăшпĕр халăх комиссариачĕсем учотпа план ĕçне хакламаççĕ.

Чăваш республикинчи Суту-илÿ Халăх Комиссариачĕ II-мĕш квартăлти тавар çаврăнăшĕн планне районсене майăн 8-мĕшĕ тĕлне çеç ярать, çапла вара районри суту-илÿ организацийĕсем çур квартăл хушши хăйсен планне пĕлмесĕрех ĕçлеççĕ. Çакăн пекех вăл районри тĕрлĕ хуçалăхлă организацисене тĕрĕс мар плансем пани те пулнă. Сăмахран: Елĕк районĕнчи промысла ертелсене II-мĕш квартăлти тавар çаврăнăшĕн планне 8 пин тенкĕ чухлĕ çеç панă, çав вăхăтрах Елĕк районĕнчи промысла ертелсем 1-мĕш квартал планне 40 пин тенкĕлĕх тултарнă. Вăрман-промысла ертелне 5 пин тенкĕ панă, вăл ертел те плана 28 пин тенкĕлĕх тултарнă.

Çапла вара Суту-илÿ Халăх Комиссариачĕ плана тавичен Промсойузпа, Вăрманпромсойузпа, Чăвашсойузпа тата ытти организацисемпе калаçса татăлман пирки, унăн планĕсем пурнăçа кĕмесĕр йулаççĕ. Кун хыççăн вара Вăрманпромсойузăн хăйĕн, Промсойузăн хăйĕн, Чăвашсойузăн хăйĕн, Суту-илÿ Халăх Комиссариачĕн хăйĕн уйрăм планĕсем районри работниксене пăтратса йараççĕ, вĕсем хăш организаци планне тĕрĕссине нийепле те ăнланаймаççĕ. Чăваш Финанс Халăх Комиссариачĕ государства тухăçне хăшпĕр районсене пĕчĕк плансем йарать. Шăхасан районĕ государства тухăçне 1-мĕш квартăлта 254 процент тултарнă. Шупашкар хули II-мĕш квартăл планне майăн пĕрремĕшне 81,9 процент тултарнă т. ыт. Çакă та ĕнтĕ Финанс Халăх Комиссариачĕ плансене чухăмăн панине кăтартса парать.

Государства тухăçне кĕрекен тавар çаврăнăшĕнчен илекен налогсем бюджетра 80 процент йăхăн йышăнаççĕ, вăл плана тултарасси уйрăмăнах: Чăвашсойуз, Тĕштыр хатĕрлев кантурĕ, спиртсавăчĕсем умне пысăк задачă кăларса тăрать. Анчах та çакăн пек ответлă ĕçе чылай хуçалăхлă организацисем ăнланса илмеççĕ.

Халăх хуçалăх планне тултарасси вăл—пысăкран та пысăк политикăлă задача, çакна аса илсе республикăри Халăх Комиссариачĕн районсене тĕрĕс плансем йамала.

Д. Карикăв.

33.000 тоннă руда кăлармалах

Вăрнарти фосфорит савăчĕн кăçал 33 пин тоннă руда кăлармала. Рудниксен савăт кăтартса панă плана пурнăçа кĕртме колхозниксемпе йединоличниксен хушшинче çеç вăйĕ тупмала. Çак майпа рудник управленийĕ, колхоз правленийĕсемпе тата йалсовечĕсемпе договăрсем туса çирĕплетнĕ. Халĕ договăрсем тăрăх руднике 325 çын тухмала.

Кăçал рудниксем икĕ çĕрте ĕçлеççĕ. Пĕри Йарар рудникĕ, тепри Уравашри рудник. Ку рудниксем иккĕшĕ те майăн 3-мĕшĕнче хăйсен ĕçĕсене тума пуçăнчĕç. Чи малтанахи кунах рудниксене ĕçлеме 180 çын тухрĕ. Кайран вара ĕçлекенсен йышĕ ÿссех пычĕ.

Кашни колхозра çурхи хĕрÿ ĕç пырать. Анчах колхозсем хăйсен социалисăмла промышленнăçне те манса хăвармаççĕ. Вĕсем хăйсен договăрĕсене лайăх пурнăçлаççĕ. Турханти Ленин йачĕпе тăракан, Кÿлхĕрринчи „Трактăр" колхозсем хăйсен договăрĕсене малтанхи кунах пурнăçларĕç.

Фосфорит савăчĕн дирекцийĕ руда кăларасси çине çителĕклĕ пăхмасть. Рабочисене валли вырттарма простанçсем çитмеççĕ. Вĕретнĕ шыв тыткалама чейниксем, куркасем пачах та çук. Суту-илÿ ĕçĕ, культурăлă ĕçсем те йапăх вырăнта тăраççĕ-ха.

Фосфорит рудинĕ кăларас ĕçре екскаватăрсем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Анчах вĕсем халĕ ĕçлеме тытăнман-ха. Айăпĕ савăтри тимĕрçĕсем çине тивет. Вĕсем руднике туса парас йапаласене иккĕмĕш вырăна хурса, машинăсен пайĕсене йусаса памаççĕ. Çакăн пирки ĕнтĕ екскаватăрсем çĕмрĕк лараççĕ.

Руда кăларас ĕçре çитменлĕхсем чылай. Ку çитменлĕхсене фосфорит савăчĕн халех сирсе йамала. 33.000 тоннă руда кăларассине пурнăçламалах.

В. Цыпленкăв.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Сухуми сывăхĕнчи „Синоп" санаторийĕ. Фишман фото-ÿкерчĕкĕ (Сойузфото)

Йĕтĕн акас ĕç мĕншĕн кайа йулса пырать

ВАРНАР, майăн 18-мĕшĕ (хамăр корр). Государствă панă план тăрăх районăн кăçал пурĕ 250 гектар йĕтĕн акмала. Майăн 15-мĕшне районра тĕштырăсене акса пĕтернĕ, 129 гектар йĕтĕн те акнă, чылай колхозсем çĕрулми лартса пĕтернĕ. Анчах 121 гектар çине йĕтĕн акасси тытăнса тăрать. Мĕншĕн?

Кунта айăпĕ пĕртте колхозсенче мар. Вăрнар районĕнчи колхозсем иртнĕ çулта Калинин облăçĕнчен кÿрсе килнĕ йĕтĕн вăрлăхне акнă. Вырăнăн-вырăнăн çав вăрлăх çинче повелика пулни палăрнă. Кăçал хĕлле çавăн пек вăрлăхсене браклаcorrespondingса колхозсем пĕр-пĕрин хушшинче лайăх та суртлă вăрлăхсене улăштарса хатĕрлесе хунă. Улăштарса илнĕ йĕтĕн вăрлăхне тĕплĕн тасатса кондицилĕ туса çитернĕ. Кÿлхĕрринчи колхоз алăпа суртласа вăрлăхăн шăтас хăватне 98 процента çитернĕ.

Анчах та çав лайăх пахалăхлă йĕтĕн вăрлăхне акасси пулмарĕ. Çуркунне çитеспе Чăваш Çĕрĕç Халăх Комиссариатĕнчен хут килет—иртнĕ çул хатĕрленĕ вăрлăха пурне те кăçал та айакран кÿрсе килнĕ вăрлăхпа улăштармала, колхозра тунă вăрлăха пĕр пĕрчĕ те акмала мар. Çав май вара, Çĕмĕрлери йĕтĕн хатĕрлев пункти урлă Вăрнар районĕ валли 32 тоннă йĕтĕн вăрлăхĕ кÿрсе килнĕ, (çитменнине тата пĕр вакунне Çĕмĕрле станцинчех пушатнă). Кÿрсе килнĕ вăрлăх пахалăхĕ колхозсенче хатĕрлениччен чылай начар, шăтас хăват та кайарах—92 процент çеç. Çавах та, Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ хушнине итлемеле, колхозсем улăштараççĕ, анчах та пурте улăштарса çитереймен. Вĕсем урапа çулĕпе килеççĕ улăштарма, йĕтĕн хатĕрлев пункти вĕсене пушшăнах калле таврать—пĕтиччен улăштарма чарса лартнă.

Халь ĕнтĕ çав колхозсене хăйсен вăрлăхне те акма хушмаççĕ, улăштарса илме те вăрлăх паракан çук. Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ татса памасăр вырăнти вăрлăхпа акма хушма районри çĕрĕç пайĕ те иккеленсе тăрать.

Çĕрĕç органĕсен оперативлăх çук пирки Вăрнар районĕнче йĕтĕн акас ĕç тытăнса тăрать.

М. Костин.

Çумкурăксене çумлаççĕ

** Тури Вылăри (Хĕрлĕ Чутай р-нĕ) Сталин йачĕпе тăракан колхоз çĕрулми лартса пĕтернĕ хыççăн кĕрхи тырă калчисем çинчи çумкурăксене çумлама тытăнчĕ. Ыраш калчине пĕр хутчен çумкурăксенчен тасатнă. Халь кĕрхи тулă çинчи çумкурăксене çумлаççĕ.

Ф. Катейĕв.

** Актайри (Елĕк р.) „Комбайн" колхозра тĕштырăсене, пахча-çимĕçсене лартса, акса пĕтернĕ хыççăн çумкуракгсемпе кĕрешме йатарласа звеносем уйăрчĕç. Çав звеносем тырпулсем çинче çумкурăксем тухнине сăнасах тăраççĕ.

А. Зайцев.

Хурт-кăпшанкăсемпе кĕрешеççĕ

Тутаркас. Районри хăшпĕр колхозсенче тырпулсене сийенлекен хурт-кăпшанкăсем палăрма пуçларĕç. Çатракас йалсоветне кĕрекен „Малала" колхозра пăрçа йышши культурăсем çинче пăрçа хурчĕ пурри палăрнă. Çавăн пекех Мăн Хураçка йалсоветне кĕрекен Жданăв йачĕпе тăракан колхозăн уйĕнче акнă тырăсем çинче тырпулсене сийенлекен хурт-кăпшанкăсем пуррине сăнанă. Çак колхозсенче çийĕнчех йатарласа уйăрнă звеносем хурт-кăпшанкăсемпе кĕрешме тытăнчĕç. „Малала" колхозра пăрçа хурчĕсене пĕтерес тĕлĕшпе тĕрлĕрен имçамсене шывпа хутшăнтарса сапаççĕ.

С. Горланăв.

Аттестаци мĕн кăтартрĕ

Çутĕç Халăх Комиссариачĕн аттестаци комиççийĕ Елĕк районĕнче хăйĕн ĕçне пĕтерчĕ. Районри 278 учителрен 238 учител аттестацине тăнă. Вĕсенчен пуçламĕш шкулсенче ĕçлеме 55 учителе, туллимар вăтам тата вăтам шкулсенче ĕçлеме 90 учителе правасем панă. Пуçламĕш шкул учителĕн тивĕçлĕхне 61 учител, вăтам шкул учителĕн тивĕçлĕхне 14 учител илнĕ.

Аттестаци пурĕ 14 учителе ĕçрен хăтарчĕ. Çĕнĕ вĕренÿ çулĕнчен пуçласа, вĕсене пурне те пекех вулав çурчĕсенче усă курма кăтартса хăварнă. Аттестаци учителсен çитменлĕхĕсене чылай палăртрĕ. Етменри пуçламĕш шкулти Павлăвă йулташ учител ĕçĕнче 13-мĕш çул ĕçлет. Апла пулин те вăл çамрăк ачасемпе мĕнле ĕçлемелине вĕренсе çитеймен-ха. Унăн урокĕнче дисциплинă начар. Вырăс чĕлхине начар вĕрентет. Ачасен тетрачĕсем таса мар, общчĕствăлă ĕçе хутшăнса ĕçлемест. Вăл партипе правителствă руководителĕсене те тĕплĕн пĕлмест. Çавăн пекех Çирикассинчи IV-мĕш класпа ĕçлекен Петр Никифăрăв йулташ та ачасене тĕрĕс воспитани параймасть. Вăл учител ĕçĕнче пĕр çул кăна ĕçлет.

— Ĕсĕ хăвăн класра çыру ĕçне мĕнле иртеретĕн?—тесе ыйтсан, хирĕç ответ пама пултараймасть. Ачасен çыру тетрачĕсене пăхсан, учител çыру мĕнле ирттермелине пĕлменни курăнать. Комиççи[4] унăн политикăлă общчĕствăлă ĕçне тата пĕлÿне пĕлес майпа сойузлă республикăсем çинчен ыйту пачĕ. Вăл сойузлă республикăсем çинчен пайан çеç илтнĕ пек тĕлĕнсе тăчĕ, ответлеме пултараймарĕ.

Йурмекейкăнри пуçламĕш шкулта I-мĕш класра вĕрентекен С. Тихăнăв учител ку ĕçре ултă çул ĕçлет, педучилищчă çумĕнче заочнă вĕренет. Ултă çул хушшинче унăн учител ĕçĕпе паллашма мар, педучилищчăшăн испытани тытма та вăхăт пулнă. Ăна вăл туман. Ачасене начар вĕрентет. Дисциплинă йапăх.

Сатлайкă шкулĕнче IV-мĕш класра ĕçлекен Николайĕв учител çырнă автобиографине вуласан, никам та учител çырнă тесе калас çук, кашни предложенинчех темиçе йанăш.

Панлири туллимар вăтам шкулти Çеменăв йулташ IV-мĕш класпа ĕçлет. Вăл миçе çул вĕреннине те пĕлме çук. Уроксене часчасах ÿсĕр пырать. Хăйĕн пĕлĕвне хăпартассипе ĕçлемест. Шкулта парти историне вĕренмели кружок ĕçлет, вăл унта вĕренме çÿремест. Педагогикăлă канашлусенче те пулмасть.

Чăваш-Сурăмри туллимар вăтам шкулта биологипе вĕрентекен Шумилăв учител ачасене тĕрĕс воспитани пама пултарайманни курăнчĕ. Вăл 1930 çулта Чăвашсен пединститутне вĕренме кĕнĕ пулнă. Ку вăхăтра вăл партипе совет правителствине хирĕç тăнă. Çавăн пирки те ăна ун чухне пединститутран кăларнă. Паллах, çавăн пек учителе çамрăк ачасене вĕрентсе, воспитани пама хушма çук ĕнтĕ.

Кунта 3—4 тĕслĕх кăна илсе кăтартрăмăр. Учител ĕçĕнчен хăтарнă 14 учителĕн те çакăн пек çитменлĕхсем пур. Аттестаци комиççийĕ V—VII-мĕш классемпе ĕçлекен учителсенчен хăшне-пĕрне пуçламĕш классене куçарчĕ. Мăн-Вылăри туллимар вăтам шкулта ĕçлекен А. Андрейĕвă, Шĕмшешри-Капейĕв, Харитонăвă, Александрăв, Истеркăра—Иванов, Иунтапари—Потапăв, Васильйĕв, Тенире—Обокăвă, Николайĕв, Семенăвă, Тавăшра—Захарăв, Раскилтре—Лаврентйĕв, Чăваш-Сурăмри—К. Шоркин, Крымзарайкăра—Иванов, Хирлепусĕнче—Иванов йулташсене пуçламĕш классене ĕçлеме куçарнă.

Аттестаци районра лайăх ĕçлекен учителсене палăртрĕ. Районра çамрăк ачасене коммунисла воспитани парассипе тăрăшса ĕçлекен учителсем сахал мар. Елĕкри вăтам шкулта иккĕмĕш класпа ĕçлекен В. Куçмина йулташ учител ĕçĕнче 23 çул ĕçлет. 23 çул хушшинче вăл вĕрентсе кăларнă ачасем халĕ учител, инженер, агроном пулса ĕçлеççĕ. Куçмина йулташ хăй вĕрентнĕ ачасенчен сахал мар тав илнĕ. Унăн класĕ уйрăмăнах дисциплинă йенĕпе палăрса тăрать, урокне итленĕ чухне вăхăт иртни те сисĕнмест. Уроксене çав тери пысăк педагогикăлă мăçтăрлăхпа ирттерет. Кашни ачана уйрăммăн пĕлсе тăрса, унпа ĕçлемели метăдсене те тупсах пырать. Çавăн пекех çав шкулта ĕçлекен Лисинă учителницă та педагогикăлă мăçтăрлăха ĕçре аван кăтартать.

Çамрăк учителсенчен те палăрса тăракансем чылай. Александрăвскри пуçламĕш шкулта ĕçлекен Н. Йарославский йулташ ачасен çыру ĕçне районра малти вырăна кăларчĕ. Çыру ĕçĕн пĕтĕм правилисене пурнăçа кĕртсе пырать. Вăл вĕрентекен класри ачасем (иккĕмĕш клас) тĕрĕс тата таса çыраççĕ.

Аттестаци учителсем хăйсен ĕçĕсем çине йапăх пăхнине те палăртрĕ. Сормăвăри шкулти учител Шорникăв занятисене хатĕрленсе пыман, плансемсĕр ĕçленĕ. Чăваш чĕлхипе çыру ĕçĕсем те туса ирттермен.

Аттестанци комиççийĕ уйрăмах учителсем хăйсен квалификацине хăпартас ĕçре тăрăшмаллине, политикăлă пĕлĕве сарса пымалине тата уроксене тĕплĕн хатĕрленсе пысăк мăçтăрлăхпа ирттерме кирлине палăртрĕ. Аттестаци хыççăн, учителсен ĕçлес хастарлăхĕ татах та ÿсрĕ.

К. Ошков.

Ответлă редактăр заместителĕ
И. П. ПАВЛОВ—ПИНЕР.

Йе. М. Браудо
Искусствăн тава тивĕçлĕ деятелĕ

РИХАРД ВАГНĔР

(1813—1938)

Паллă музыкантсемпе драматургсенчен пĕри—Рихард Вагнĕр çуралнă кунтан пире 125 çул уйăрса тăраççĕ.

Рихард Вагнер 1813 çулхи майăн 22-мĕшĕнче Лейпциг хулинче çуралнă.

Музыкăпа хăй тĕллĕн ĕçлес çул çине Вагнĕр 1833 çулта хормейстĕр пулса тухнă. Вăл 1833 çулхи йанварĕн варринче хормейстĕрта уйăхне 10 гульденла, тепĕр тĕрлĕ каласан, 10 тенкĕле ĕçлеме килĕшнĕ. Çамрăк музыкант нимĕçсен хулисем тăрăх çÿренĕ чухне нумай выçă та аптранă. Вăл пĕчĕк операă трупписенче ĕçленĕ, сезон пĕтсен ĕççĕр тăрса йулнă.

Вагнĕрăн театрта ĕçлеме пуçланă вăхăтрах унăн публицист, критик пулса ĕçлесси те вăйланать.

1837 çулта Вагнĕр пĕрремĕш хут Российăна килсе, Ригăри оперăн дирижорĕн постне йышăнать. Ригăра вăл, Бульвĕр романĕн сÿжечĕпе усă курса, Риман йулашки трибунĕ çинчен „Риенци" йатлă героикăлă, пысăк оперă çырма тытăнать.

„Риенци" оперă валли çырнă увертюрăсене, героикăлă музыкăн паха тĕслĕхĕсем вырăнне шутласа, симфонилĕ концертсенче халĕ те выляççĕ.

Пĕр музыкăна хавхаланса йуратакан çын пулăшнипе Вагнĕра вăрттăн майпа, паспăртсăрах Российă чикки урлă каçса кайма тÿрĕ килет. Ун хыççăн вăл малтан Лондăна, кайран вара Парижа пырса лекет. Вагнĕр Парижре 3 çул (1839—1842) пурăннă. Унăн „Риенци" оперĕ сценă çинче пысăк ăнăçпа усă курасси çине шанмали пулман, Вагнĕр çавăнпа та укçа-тенкĕ тĕлĕшĕнчен пысăк йăварлăхра пулнă.

Çапах та, Парижре пулни Вагнĕра общчĕствăпа политикă çине çĕнĕлле пăхма вĕрентнĕ. Кунта вăл нимĕçсен аслă поечĕпе, хăйĕн тăван çĕршывĕнчен хăваласа кăларса йанă Генрих Гейнĕпе курса тусланать. Гейнĕ ăна сен-симонисăм вĕрентĕвĕпе паллаштарать. Çапла майпа хĕрĕхĕмĕш çулсен пуçламĕшĕнче Вагнĕр тĕнче çине революцилĕ-естетикăла пăхасси пуçланать. Парижри музыкăлă пурнăç çинчен çырнă паха та пит хăйар статйисенче Вагнĕр Париж буржуйĕсен тулашĕнчен суйа илемлĕхпе витĕннĕ, содержанисĕр искусствине çилĕлĕн питлет.

1845 çулта Вагнĕр чиркÿ ылханакан хавхаланулă поет çинчен вăтам ĕмĕрте хурăннă халап сÿжечĕпе „Тангейсер" операна çырса пĕтерет. Тăвăллă революци пулнă 1848 çулта çырса пĕтернĕ „Лоэнгрин" йатлă романтикăлă оперăпа Вагнĕр тата та пысăк çитĕнÿ тăвать. Ку оперăра, вăл революцилĕ пурнăçран нумай инçетре тăрать пулсан та, пĕтĕмĕшлĕ ăнланмалăха кĕрсе ÿкнĕ художник умне ыйту кăларса тăратать, анчах вăл етемлĕхе усă паракан художникĕн мĕн тумали çинчен кирлĕ пек ответ тупаймасть. Хăйĕн музыкăлă кĕввисемпе тата илемлĕхĕпе тĕлĕнтерекен „Лоэнгрин" оперă Вагнĕр романтисăмĕн йулашки чикки пулса тăрать.

Вагнĕр революци йенне сулăнасси власçсемшĕн паллă пулнă, çавăнпа ĕнтĕ сăлтавне ăнлантарса памасăрах унăн мĕн пур произведенийĕсене репертуартан кăларса пăрахнă. Вагнĕр нимĕç интеллигенцин революцилĕ ушкăнне хутшăннă. Хальхи вăхăтра вăл Дрезденра пулнă хĕçпăшаллă пăлхава хатĕрленессинче активлăн хутшăнни çинчен нийепле те иккеленме май çук.

Вăл çарсем хушшинче агитаци сарнă, революцилĕ изданисене редакциленĕ, пăлханакан хула çыннисем валли çар хатĕрĕсем илсе пырассине йĕркелесе тăнă. Прусси çарĕсем Дрезден хулине йышăнсан, Вагнĕр, полици хĕсевĕнчен çăлăнас шутпа, хуларан тухса тарнă. Вăл Швейцарине куçса, Цюрихре пурăнма пуçланă. Çапла майпа, Вагнĕр 13 çул хушши, 1849 çултан пуçласа 1862 çула çити, политикăлă емигрант пурнăçĕпе пурăннă.

Емигрантла пурнăçăн малтанхи çулĕсенчех Вагнĕр хăйне Дрезденри баррикадăсем патне илсе çитернĕ шухăшсемпе суннă. Çав çулсенчех вăл хăйĕн „Кольцо Нибелунга" йатлă чаплă, музыкăлă-драмăлă произведенине çырма пуçлать.

„Кольцо Нибелунга" произведенире, малтанхи планĕ тăрăх Вагнĕр пусмăрта пурăнакан етемлĕх социаллă ирĕклĕхшĕн кĕрешнин тĕп тĕллевĕ пулса тăракан тĕнчен революцийĕ çинчен хăй мĕнле шухăшланине ÿкерсе хăварасшăн пулни курăнать.

Çапах та аллăмĕш çулсен варринче Вагнĕрăн ăнланăвĕнче пысăк улшăну пулса иртет. Унăн психологинче ывăнупа тĕллевсĕрлĕхĕн елеменчĕсем çийеле тухаççĕ. Нимĕçсен политикăлă радикалисăмĕн йенче тăракан, Фейербахна пĕр шухăшлă пулнă хĕрÿлĕ Вагнĕр редакципе тата унăн демократилĕ идеологĕпе—Шопенгауер йенне сулăнма тытăнать. „Кольцо Нибелунга" произведенин композицине вĕçлемесĕрех, хăйĕн йывăр пурнăçĕпе тертленекен композитăр, 13-мĕш ĕмĕрти роман тăрăх çырма тытăннă „Тристан и Изольда" йатлă музыкăлă драмăн сÿжечĕ çине куçать. Ку рыцăрла романта Вагнĕр çын харпăрхăй ирĕкĕне пурнăç тума пултарассине хирĕçлесе, пурнăç тăвасси пĕтĕмпех раскалтан килнĕ пек туса кăтартма шутланă. Çапах та „Тристан и Изольда" произведенин музыкăлă йĕркелĕхĕ художĕствă тĕлĕшĕнчен пысăк вырăнта тăрать. Ку произведени 19-мĕш ĕмĕрти лирикăлă оперăн паха тĕслĕхĕсен ретĕнче шутланать.

Вагнĕрăн биографийĕ аллăмĕш çулсен иккĕмĕш пайĕнче питĕ йывăррăн аталанса пырать. Композитăрăн пуçне, телей шыраса, нимĕçсен ытти нумай емигранчĕсем пек, Американа кайас шухăш та пырса кĕрет. „Тристан и Изольда" йатлă произведенине вăл Бразили тĕп хулинче Рио-де-Жанейрора вырнаçтарма ĕмĕтленет. 1859 çулхи март уйăхĕнче Вагнĕр Швейцаринчен Венецине куçать, анчах унта та нумай вăхăтах пурăнаймасть, Германин вăрттăн полицийĕ хĕтĕртнипе ăна часах унтан кăларса йараççĕ. Вара композитăр тепĕр хут Париже кайма шут тытать, унти пысăк оперă театрĕнче „Тангейзер" оперине лартма ĕмĕтленет. Франци поечĕсемпе художникĕсем хушшинче туссем нумай тупать пулин те, çапах кунта та ăнăç илеймест.

Йурăхлă сÿжет шыраса, Вагнĕр тахçанах шухăшласа хунă „Нюренбергские мастера пения" йатлă комедилĕ оперăн планне аса илет. Вăл ăна çырма тытăнать, анчах тертлентерекен нушалă пурнăç ăна ку оперăн композицине пăрахтарса, куçса çÿрекен концертсен дирижорĕ туса лартать. 1863 çулхи февральпе март уйăхĕсенче Вагнĕр хăйĕн тата Бетховенăн произведенийĕсенчен тăракан симфонилĕ концертсен дирижорĕ пулса Петербургра тата Мускавра пурăнать. Унăн çакăн чухне панă концерчĕсене вырăс публики питĕ кăмăлласа йышăннă. Ун хыççăн Вагнĕр кашни çулах Российăна симфонилĕ концертсене дирижорлама килме кăмăл тăвать. Российăран таврăннă май Венă сывăхĕнче чарăнсан, Вагнĕрăн нумай парăмсенчен хăтăлса çитме хал çитмен. „Мейстерзингеры" оперăна çырас ĕç питĕ вăрахăн пулса пынă. Çак йывăр вăхăтра композитăра Мÿнхена чĕнеççĕ. Унта малтанхи хут „Нюренбергские мейстерзингеры" оперăна лартнă. Вăл пысăк ăнăçлăхпа иртнĕ.

Мÿнхĕнран Швейцарине куçсан, Вагнĕр „Кольцо Нибелунга" оперă çинче ĕçлеме тытăнать. 1876 çулта илемлĕ хулара, Байрейтра, „Кольцо Нибелунгăн" тăвата музыкăлă драмине лартаççĕ.

Аслă композитăр 1883 çулхи февралĕн 13-мĕшĕнче, 70 çула çитсе, Венгрире вилнĕ. Вагнĕрăн пурнăç ăнланăвĕнче пысăк кăлтăксем пулнă пулсан та, вăл, художник пулса, пысăк вырăн йышăнса тăракан произведенисем çырса хăварнă.

Хальхи фашисăм Вагнĕра, унăн биографийĕнчи тата унăн йулашки вăхăтĕнчи философийĕнчи пулнă тĕксĕм вырăнсемпе усă курса, тĕрлĕ майпа експлоатацилеме тăрăшать пулсан, епĕр вĕсене мĕн пур тивĕçлĕхпе калама пултаратпăр: „Илĕр аллăрсене Вагнĕр çинчен!" Мĕншĕн тесен, унăн творчĕствинчи чи паха ĕçĕсем пĕтĕмпех хĕрĕхĕмĕш çулсенчи революцилĕ шухăшсен пысăк çĕкленĕвĕпе хавхаланса пулнă.

„Чăвашвăрманпром" трестне
автобазăсенче ĕçлеме
АСЛĂ МЕХАНИКСЕМ КИРЛĔ

Условисем килĕшÿ тăрăх. Çак адрĕспе пымала: Шупашкар, Урицкайа урам, 3. „Чăвашвăрманпром" трест Кадрсен пайĕ.

2—2

КИНО театрта — Саслă, илемлĕ, çĕнĕ фильм На северном полюсе. программăра 4 тата 5 № кино-журналсем Орденоносная Чувашия

Академи театрĕнче — Чăваш филармонийĕ КОНЦЕРТ

Шупашкарти коммуналă строител техникумĕ
1938—39 ВĔРЕНÿ ÇУЛЕНЧЕ
кĕркунне ĕçрен уйăрăлса вĕренме пĕрремĕш курса 90 студент илесси çинчен пĕлтерет
Техникум граждăнла-коммуналă строителствăн
ТЕХНИК-СТРОИТЕЛСЕНЕ ХАТĔРЛЕТ
Техникумра вĕренмели срук 3 çул та 10 уйăх

Вĕренме ССР Сойузĕнчи граждăнсене (арçынсене тата хĕрарăмсене) те 16 çулхисенчен пуçласа 30 çула çитнисем таран, 7 çул вĕреннисене илеççĕ.

Вĕренме кĕрес текенсене пурне те, вăтам шкулпа рабфак пĕтернисемсĕр пуçне, çак предметсем тăрăх испытани тăваççĕ: математикă, вырăс чĕлхипе, литературă, физикă, географи, тата политграмăтă.

Испытанире вырăс челхипе литературăна тата математикăна сăмахпа ыйтаççĕ, тата çыртараççĕ, ытти предметсене сăмахпа ыйтаççĕ.

Зайавленисене августăн 10-мĕшĕччен йышăнаççĕ.

Зайавленипе пĕрле çаккăшкал документсем кирлĕ:
Автобиографи, туллимар вăтам шкултан вĕренсе тухнине кăтартакан свидетелствă (подлинник), хăçан çуралнине кăтартакан свидетелствă, икĕ фотокартăчкă—(кашни çинче хăй ал пусса государствă учрежденинче çирĕплетни пулма кирлĕ) çар тивĕçлĕхне (военнообйазаннăйсен) кăтартакан справкă, сывлăх çинчен справкă, паспăрт пĕрле илсе пымала.

Испытанисем августăн 13—20-мĕш кунĕсенче пулаççĕ. Испытанине те вĕренме те техникум чĕннипе çеç пымала.

Занятисем сентабĕрĕн 1-мĕшĕнче пуçланаççĕ.

Вĕренме илнисене пурне те стипенди параççĕ. Техникумăн общчежити, столовăй, парикмахĕрски тата кĕпе-йĕм çумалли пур.

Ыйтусемпе зайавленисене 40 пуслăх почтă маркипе пĕрле çак адрĕспе йамала: Шупашкар хули, Чăваш АССР, Плĕханăв урамĕ, 7, коммуналă строителствă техникумĕ.

ДИРЕКЦИ.

2—2

Уполномоченный Чувашглавлита № 256

Гор. Чебоксары, Типография № 3 Чувашполиграфтреста. Заказ № 408